83.39(=Чув)6-8
57
-50187



П.З. Владимирова

ЛЮДМИЛА САЧКОВА ПУЛТАРУЛĂХĔНЧИ ПУБЛИЦИСТИКĂПА ИЛЕМЛĔ ЛИТЕРАТУРА ТУРТĂМĔСЕМ

Шупашкар – 2019

Национальная библиотека ЧР
4-050187

Кэ3.39(2Чув)6-8
В57

РАҪҪЕЙ ФЕДЕРАЦИЙĚН ВĚРЕНӲПЕ ĂСЛĂЛĂХ МИНИСТЕРСТВИ

Федерацин аслă професси пĕлĕвĕ паракан
патшалăх бюджет вĕренӳ учрежденийĕ
«И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ»

П.З. Владимирова

ЛЮДМИЛА САЧКОВА ПУЛТАРУЛĂХĔНЧИ ПУБЛИЦИСТИКĂПА ИЛЕМЛĔ ЛИТЕРАТУРА ТУРТĂМĔСЕМ

Шупашкар – 2019

ББК Ж43(2)(=635.1){6}*8Сачкова 4*44-203

УДК 821.512.111-4Сачкова

Ăслăлăх ертӳçи:

филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ, доцент

Васильева Людмила Александровна

Владимирова П.З. Людмила Сачкова пултарулăхĕнчи публицистикăпа илемлĕ литература туртăмĕсем. – Шупашкар: Типографи Радуга, 2019 - 77 с.

Кĕнекере Л.Н. Сачковăн ĕçĕ-хĕлне çутатнă. Унăн пултарулăхĕнчи публицистикăпа илемлĕ литература туртăмĕсене тишкернĕ.

Кĕнекене журналистика историне тĕпчекенсем, студентсемпе преподовательсем тата журналистикăпа интереслекенсем валли хатĕрленĕ.

Ч-50187

Национальная библиотека Чувашской Республики

Владимирова П.З.,2019

КӲРТĔМ

Пичет массăллă информаци хатĕрĕсен тытăмĕнче чи пĕлтерĕшли шутланать. Вăл сăмах урлă халăх ăс-тăнне аталантарать, унăн культура шайне ӳстерет. Сăмах-этеме вăй-хал, шанчăк парать. Акă мĕнлерех çырнă унăн хăвачĕ пирки чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай:

Эп сăмах хăватне ĕненетĕп,
Эп пĕлеп: сăмахпа этеме
Амантма та пулать, ӳкерме те,
Ӳкнине те пулать çĕклеме.

Çын чунне амантас мар тесе сăмахпа пĕлсе, асăрханса усă курмалла. Шăпах пичет ăстисем сăмах пуянлăхне туйма вĕрентеççĕ.

Ăс-тăн илемлĕхĕ сăмахра пулнине авалхи чĕлхеçĕсем, сăмахçăсем, пултарулăх ĕçченĕсем каласа хăварни те çакнах çирĕплетет. Çакăн çинченех Платон та, Демокрит та, Аристотель те тата ытти ăславçăсем шухăшланă, сахал мар çырнă: «Калана сăмах вăл тĕрĕс, витĕмлĕ, вырăнлă тата илемлĕ пулмалла, шухăша палăртнă чух чĕлхе пуянлăхĕпе, илемлĕ сăмахсемпе усă курма пĕлмелле». Анчах та мĕнре-ха сăмахăн, уйрăмах тăван сăмахăн иксĕлми вăйĕ, çуначĕ? Тăван сăмах вăл-пин-пин ахах. Чăваш сăмахлăхĕ тăван чĕлхе пуянлăхне, илемне уççăнрах палăртма май парать. Халăх сăмахлăхĕ ăс-хакăл çупçи пулса тăрать. Литература халăх сăмахлăхĕнчен вăй илсе, аталанса пырать. Чăваш çутлăхĕн ашшĕ Иван Яковлев Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренекенсене тăван халăх йăли-йĕркине, сăмахлăхне хисеплеме вĕрентнĕ. Сăмах вĕççĕн çӳрекен тĕрлĕ халапсемпе каларăшсем, юрăсем, йăла-йĕрке пур халăхăн пуласлăхĕ пысăккине ĕненнĕ вăл.

Паянхи журналистикăна çак саманана туллин ăнланакан, пурнăçа шалтан туякан, халăхăн кăмăл-шухăшне чĕри сывăхне илекен калем ăстисем килчĕç. Вĕсен алли çирĕп. Çак çĕнĕ çынсем çамрăклăх

айванлăхĕнчен хăтăлнă, вĕсен пурнăçри позицийĕ чулланса ларманха. Хăй сăмахне уçăмлăн та çивĕччĕн калама хăраман, çав вăхăтрах çепĕç те техĕмлĕ чĕлхеллĕ çыравçă, журналист Людмила Сачкова – çавсенчен пĕри. Унăн хайлавĕсене ватти те, вĕтти те юратса вулать. Людмила Николаевна Сачкова пултарулăхĕнче çынлăх, чунлăх, ăшă кăмăл тĕп вырăнта тăрать. Унăн кашни произведенийĕнче тарăн шухăш, çыннăн психологине пĕлни, чун-чĕрере мĕн пулса иртнине туйма пултарни, çынна юратни сисĕнет. Хаçат-журналта тĕрлĕ тематикăпа пичетленнĕ статйисене вуласах тăтăм. Людмила Николаевна çĕкленĕ чылай ыйту ман чуна та çывăх. Унăн уçăмлă шухăшлавĕ, хăйне мĕн пăшăрхантарнине хăрамасăр калани, пурнăç пирĕн ума кăларса тăратакан ыйтусем çине хурав шыраса вĕсене обьективлă хаклани килĕшрĕ. Мĕнле пурăнать-ха паян самана чуппинчен юлман çыравçă тата публицист? Мĕнле шухăшсем канăç памаççĕ ăна? Людмила Сачковапа тĕл пулас умĕн ун пирки тĕнче тенелĕнче мĕн-мĕн çырнине тишкертĕм. Вĕренсе тухаканăн квалификаци ĕçне çырнă май ç ка информаципе усă курма шутларăмăр.

Этем кун-çулĕн ăрасналăхĕ пекех литература пултарулăхĕ те кашни çыравçăн тĕрлĕрен, хăйне евĕр: пĕрин çăлкуç таппиллĕн-тăрукăн-хăюллăн çĕкленет, теприн, çуллахи каç тăнăçлăхĕ евĕр, шăппăн-шăппăн сăрхăнса тухать, виççĕмĕшĕн васкамасть, хăйне вăрахчен палăртмасть, каярахпа тин сасă парать...

Чăвашсен паллă журналисчĕ, çыравçи Людмила Николаевна Сачкова 1957 çулхи чӳк уйăхĕн 28-мĕшĕнче Патăрьел районĕнчи Çĕнĕ Ахпӳрт ялĕнче çуралса ӳснĕ. Тĕпчев ĕçне пурнăçланă май, Людмила Сачковăпа тĕл пулса калаçма тӳр килчĕ. Аса илӳ авăрне путса, тарăн шухăша кайса Людмила Николаевна ачалăхĕ пирки каласа пачĕ: «Астăватăп, пĕчĕккĕ чухне çул хĕррине тухса тăма юрататтăм. «Икарус» автобуссем тин кăна çӳреме пуçланăччĕ. Вĕсем ман умран

космос карапĕ пек мăнаçлăн чашкăрса иртсе каятчĕç. Автобусри çынсемпе пĕрле ларса каяс килетчĕ. Мана вĕсем таçти темле чаплă тĕнчене вирхĕнеççĕ пек туйăнатчĕç. Эпĕ вара, мĕскĕнскер, пĕчĕкскер, çав тĕнчерен тăрса юлнă пек туяттăм хама. Куççӳль тухичченех чун хурланса юлатчĕ. Паянхи кун та хам умран иртекен пĕр автобусран тăрса юлас килмест.

Шупашкара Патăрьел районĕнчи Çĕнĕ Ахпӳртрен аслă пĕлӳ илме килсессĕн, эпĕ журналистика факультетне заявлени çырса патăм. Документсене йышăнакан комиссире мана: «Кун пек факультет университетра çук, чăваш филологи уйрăмĕнче журналистика факультативĕ пур, çавăнта çыр», – терĕç.

Çапла вара вăл И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн чăваш филологи уйрăмне вĕренме кĕрет. Алла диплом илсен Пушкăрт республикинче тăрăшса ĕçлет. Унтан тăван республикăна таврăнса Елчĕк районĕнчи Кушкă ялĕнче шкул ачисене чăваш чĕлхипе литературине вĕрентме пуçлать. Çамрăк ăрăва сăмах хакне, калаçу тĕшшине туйма вĕрентет, çав хушăра хăй те вĕренсе пырса литературăна кĕме хатĕрленет.

Людмила Николаевна вун виçĕ çул Чăвашрадио редакторĕнче, «Хыпар» хаçатра информаци, «Пике» журналăн, Шупашкар районĕнчи «Тăван Ен» хаçатра пай пуçлăхĕсенче вăй хунă. Унта та, кунта та хăй пултаруллă иккенне кăтартса панă.

Людмила Сачкова сăвă-калав çырма шкулта вĕреннĕ чухнех, 1986 çулта тытăннă, тĕрлĕ хаçат-журналсенче пичетленнĕ. Хайлавсенчи персонажсенчен ытларахăшĕ – ял çыннисем, ака-суха ĕçĕпе чыслă пурăнакан яш-кĕрĕмпе хĕр-упраç, хĕрарăмсемпе арçынсем, е пач урăхла, эрехе пула пăсăлма тытăннă ăнăçсăр шăпаллă телейсĕр çынсем.

Л. Сачкова хăй те геройĕсем пекех, ытлашши шав тумасăр, анчах пысăк кăмăлпа ĕçлесе пурăнакан çын. Чăваш кĕнеке издательствинче

1996 çулта унăн пĕрремĕш кĕнеки – «Чĕкеçĕм, чĕкеç...» ятпа кун çути курать. 2000 çулта çыравçăн «Ытарайми куçсем» кĕнеки пичетленсе тухать. «Шăпăрлан» вара 2003 çулта кун çути курать. 2012 çулта «Çеçенхирти ир» тăваттăмĕш кĕнеки вулакан патне çитет.

Людмила Сачкова пыра-киле хăйне драматургире кăтартма пуçлать. Унăн пьесисемпе Чăваш патшалăх пукане театрĕ – «Шăпăрлан» (1998), Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕ «Юрату Турри» (2000) «Эсĕ кайрăн та» (2002), «Çухалнă хуркайăк çулĕ» (2004) спектакльсем сцена çине кăларать. 2011 çулта Чăваш патшалăх академи драма театрĕн сцени çинче Людмила Сачкова çырнă «Пĕртен-пĕрескерĕм» пьеси тăрăх лартнă спектакль тухать.

Автора моральпе чыслăх тата обществăра çын епле пурăнни, кашни харпăр хăйпе ăнланулăх тупма тăрăшни хумхантарать. Публицистика стайисенче вара-тăван чĕлхе, тĕн, культурапа искусство ыйтăвĕсем.

Людмила Сачкова ячĕ чăваш литературинче çирĕммĕш ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче çирĕпленет.

1997 çултанпа Людмила Сачкова – Раççей писателĕсен Союзĕн членĕ, Раççей Федерацийĕн театр деятелĕсен союзĕн пайташĕ, Чăваш Республикин этнокультурин тава тивĕçлĕ деятелĕ. Журналистсен союзĕн Хисеп Грамотине, ЧР культура министерствин Хисеп Грамотине, Чăваш патшалăх гуманитари институчĕн Тав хутне тата Чăваш наци конгресĕн, Республикăри хĕрарăмсен канашĕн Хисеп Грамотине тивĕçлĕ пулнă.

Людмила Сачкова алли çирĕп, ĕçе пĕлсе, ĕненсе тăвать. Вулаканăн тепĕр чухне кĕске кăна хайлавсем пулас пысăк ĕçĕн пуçламăшĕ мар-ши текен шухăшсем çуралаççĕ. Калавсем хăйсем тĕллĕн вуланаççĕ, вĕçленӳллĕн тĕвĕленеççĕ. Пултаруллă çыравçăран ытларах та ытларах кĕтме пуçлăпăр, шанăçа ӳстерме майсем пысăк.

Сачкова хайлавĕсене вулакан кĕтет. Тахçантанпах хаçатсемпе журналсенче пичетленекен хайлавĕсене вуласа-сăнаса тăрать. Юлашки вăхăтра чунра унăн сăнарĕ пĕтĕмĕшле пиçсе çитрĕ. Хайлавĕсем тарăн шухăшлă, кăсăк сюжетлă, кашни çыннăн чун-чĕрине хускатма пултараççĕ, вĕсенче тарăн йĕр хăвараççĕ. Çавна пулах тĕпчев ĕçне Людмила Сачкова пултарулăхĕпе çыхăнтарас терĕмĕр.

Вĕренсе тухаканăн квалификаци ĕçĕ валли «Людмила Сачкова пултарулăхĕнчи публицистикăпа илемлĕ литература туртăмĕсĕм» тема суйласа илтĕмĕр.

I ПАЙ. ЛЮДМИЛА САЧКОВА – ПУБЛИЦИСТ

1.1. «Пике», «Ялав» тата «Тăван Атăл» журналсенче тухнă статьясенчи туртăмсем

Литература пĕлĕвĕпе журналистика ăслăлăхĕсенче мĕн вăл публицистика текен ыйту тавра хĕрӳ тавлашусем тахçантанпах пыраççĕ, вăл халь те тăсăлать. Тавлашăва хутшăнакан ăсчахсем, критиксем, журналистсем çак ăнлав пирки хăйсен шухăшне каласçĕ. Тӳрех палăртас пулать, нумай рки хăйсен шухăшне каласçĕ. Тӳрех палăртас пулать, нумайăшĕн шухăшсем пĕр килмеççĕ, мĕншĕн тесен çак ыйтусене кашни хăй майлă ăнланать. Пĕрисем каланă тăрăх, хаçатра мĕн пичетленни, эфира мĕн саланни-пурте публицистика иккен. Теприсем вара, пулса иртекен ĕç çинчен илемлĕх мелĕсемпе усă курса, пулăмсене сăнарлă уçса панă хайлавсене публицистикăллисен шутне кĕртеççĕ. Виççĕмĕшсем иккĕмĕшĕсене хирĕçлесе: «Илемлĕх мелĕсемпе усă курса ӳкерчĕклени публицистикăра кирлĕ мар, ун пек япаласемпе очерк, фельетон, памфлет çырнă чухне çеç усă курма пулать»,-теççĕ.

Мĕн-ха вăл публицистика? Энциклопеди словарĕ: «Публицистика вăл-хальхи пурнăçăн чи кирлĕ ыйтăвĕсене уçса паракан обществăлла-политикăлла литература»-тесе ăнлантарать. Публицистика йĕрĕсене тĕплĕн тупса палăртас тенĕ чухне çакна та манмалла мар, публицистика ытларах чухне çĕршывăн кулленхи пурнăçне, историне çырса парать. Лайăххине, усаллине, кирлине сыхласси, япăххине халăхран сиресси те унăн тĕллевĕсенчен пĕри пулмалла. Паллах, публицист шухăшĕ пĕр çын сасси çеç мар, вăл халăх сасси, халăх куçĕ пулмалла тетпĕр. Унăн тĕллевĕсем те çав тери ырă та таса, мал ĕмĕтлĕ пулмалла, мĕншĕн тесен вăл халăх тĕнчекурăмне, тавракурăмне, шухăш-кăмăлне йĕркелес ĕçре пысăк вырăн йышăнать. Публицистика нумай ĕмĕрсем хушши аталанса, вăй илсе пынă.

Публицист яланах-самана çынни, çавăнпа та вăл паянхи çивĕч ыйтусенчен ниепле те уйрăлса юлаймасть.

Людмила Сачкова хăйĕн ĕçĕсенче яланах сăмах ăстипе ăсчах ăсталăхĕн пултарулăхне пĕтĕçтерсе тăрать. Вăл сăнанипе, тĕрлĕрен пулăмсем çине айккинчен çеç пăхса тăнипе лăпланмасть, çав пулăмсене тĕплĕн тишкернĕ май вулаканăн ăс-хакăлне, туйăмне хускатса унпа пĕрле пĕтĕмлетӳсем патне пырса тухать. Хăйĕн ĕçĕнче вăл е ку факт пирки калаçу пуçарать пулсан çав пулăма тĕплĕ тишкерсе ăна пур енлĕ уçса пама тăрăшать, Людмила Сачкова алла диплом илсен икĕ çул Елчĕк районĕнчи Кушкă шкулĕнче тăван чĕлхепе литературăна вĕрентнĕ, унтан «Коммунизм ялавĕ» хаçата ĕçлеме куçнă, ревизи корректорĕнче вăй хунă. Каярахпа «Пике» журналта, 13 çул Чăвашрадион литературăпа драма передачисен редакторĕнче ĕçленĕ, писательсемпе артистсен пултарулăхĕ çинчен радиокомпозицисем йĕркеленĕ, республикăн культурăпа искусство пурнăçне çутатнă, йăхташсем пурăнакан регионсене тухса çӳренĕ. 2005-2006 çулсенче «Хыпар» хаçатра информаци пайĕн редакторĕнче, 2010-2013 çулсенче Шупашкар районĕн «Тăван ен» хаçат редакцийĕн пай пуçлăхĕнче вăй хунă, унтан-Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн редакципе издательство пайĕн техника редакторĕнче тимленĕ. Людмила Сачкова 500 яхăн публицистика статйи çырнă. Вĕсене хальлĕхе тарăннăн тĕпчемен-ха. Сачкова çутатса панă ыйтусем шутне çаксем кĕреççĕ: чăваш халăхĕн пурнăçĕ улшăнса, çĕнелсе пыни; культура, ӳнер ыйтăвĕсене татса парасси; çут çанталăка упраса хăварасси, ял хуçалăхне çĕклесси т.ыт.те. Людмила Сачкова публицистăн тĕп тĕллевĕ - интереслĕ, илемлĕ, ĕнентерӳллĕ çырса кăтартасси. Журналистăн ĕçри, профессиллĕ пултарулăхĕнче чи кирлĕ енсем тесе эпир çыравçă çĕршыв тĕллевĕсене пурнăçлассине мала хунине, принципăха, ĕçе

тĕплĕн пĕлнине, пурнăçри пулăмсене тишкерме пĕлни, пултарни тесе палăртатпăр.

Журналистика теорийĕ чăн малтан пичет ĕçне-хĕлне хаклассинчен пуçланнă, мĕншĕн тесен вĕсем радиопа телевиденирен, фотографирен, кинодокументалистикăран малтан пуçланса кайнă. Кашни кун тухакан пĕрремĕш хаçат Европăра 1609 çулта çуралнă. Раççейре -1702 çулта. Пирĕн çĕршывра радио 20-30-мĕш çулсенче, телевидении вăрçă хыççăн анлă сарăлнă. Журналистикăн ытти хатĕрĕсем пичет принципĕсене, функцийĕсене тĕпе хурса аталаннă, массăллă информации хатĕрĕсен системине пĕр тан вăй пулса кĕнĕ, хăне евĕр тивĕçлĕ вырăн йышăннă. Тĕпчев ĕçне хатĕрленĕ май Людмила Сачковăпа пĕрре мар тĕл пултăм, хăйне май интервью та хатĕрлерĕм. Ăна радиохумсем çине те кăлартăмăр.

-Людмила Николаевна, хăвăр ĕçĕр-хĕлĕрпе паллаштарсамăр, мĕнлерех çитĕнӳсемпе палăртăр юлашки пилĕк çулта?

- Журналистикăна ача чухнех кĕрсе кайрăм, 2-3 классенчех «Пионер сасси» хаçата заметкăсем ярса параттăм, пĕринче вĕрентекен пĕр купа хаçат илсе килчĕ те пире, шăпăрлансене, вĕсемпе паллашма ыйтрĕ, пĕр статйине тишкерӳ тума хушрĕ, эпĕ «Шăннă кăсăя» заметкăна суйласа илтĕм, каярах ăна хаçата ярса патăм, ара, ача пулнă-çке, айван... Мана хаçатран тӳрех хурав килчĕ, кун пек статья пичетленнине, енчен те çырас кăмăл пулсан, хаваспах ĕçсем кĕтни пирки хыпарланăччĕ унта. Шăп çавăнтан çырас кăмăл çуралчĕ те. Хаваспах хаçата хамăн ĕçсене ярса пама пуçларăм. Çырасси, литература енне туртăнасси аннерен тесе шутлатăп. Пирĕн кукка - Иван Ильич Мешков журналист пулнă. Манпа вара ытларах анне мар, атте ларатчĕ, эпĕ мĕн çырнине пăхатчĕ, кăсăкланатчĕ.

-Людмила Николаевна, эсир хăвăра ытларах кам пек туятăр: журналист е писатель?

-Çулсем иртнĕçемĕн писатель пек ытларах туятăп.

-Эсир истори романĕ çырма шутланине те пĕлетĕп, çак ĕçе пуçăнма мĕн хистерĕ?

-Мана хамăр ялти çынсен хушамачĕсем тахçантанпах канăç памастчĕç: мĕншĕн тĕрлĕ нации хушамачĕ нумай? Сăмахран, Армянов, Казаков, Калмыков, Каримов, Китай, Киргизов, Евреев, Иракин, Руссаков, Цыганов тата ытти те. Ăçтан, епле пулса кайнă вĕсем? Ял тавра пĕлӳçи, шкул директорĕнче ĕçленĕ Ксенофонт Лекарев ял историйĕ çинчен «Тăван ялăм, савнă ялăм» кĕнеке çырнăччĕ. Пĕррехинче вăл мана çапла каланăччĕ: «Пирĕн ял историйĕ питĕ пуян. Люда, атя-ха иксĕмĕр пĕрле роман çырар». Ун чухне çамрăк пулнă, килĕшмерĕм. Институтра ĕçленĕ май халăхăмăрăн кун-çулĕ çинчен çырнă монографисемпе паллашатăп. Ял историйĕпе те ытларах та ытларах кăсăкланма пуçларăм. Хамăр йăхăн пурнăç йывăçне 9 сыпăк таран турăм.

-Людмила Николаевна, эсир хаçатра та, радиора та вăй хунă. Ăçта хăвăра хăтлăрах туяттăр?

-Паллах, радиора. Сассăм эфирта илемлĕн янăратчĕ. Ятарласа хама курма пыратчĕç - каччăсем те, карчăксем те... «Шураппа» радиокăларăма хĕрарăмсем уйрăмах юрататчĕç. Урамра сасран палласа пырса калаçатчĕç.

-Енчен те ылтăн пулăран виçĕ ĕмĕт пирки ыйтма май килсен хăшĕсене пурнăçа кĕртеттĕр?

-Чи малтан сывлăх ыйтнă пулăтăм, унтан ывăла авлантарăттăм, мăнуксем ыйтăттăм.

-Хăвăр та асамçă пулнă пулсан çĕр çинчи хăш çитменлĕхе пĕтерĕтттĕр?

-Вăрçă-харçа, ултава тата вăрлассине.


Хăйĕнпе пуçланă калаçăва Людмила Сачкова çапла вĕçлерĕ: «Кăçал эпĕ хама çĕнĕрен çуралнă пекех туйнă вăхăт пулчĕ. Ку вăл хам çулпа,

хамăн вăя ăнланса илнипе, пурнăçа яр уççăн курса илнĕ самант пулчĕ. Ку кампа та, мĕнпе те çыхăнман. Кунта пултарулăх та, кунта ман чун та, ăс-хаклав та, юлташсем те, ман тавралăх... Урăхларах каласан, кăмакара çăкăр пиçсе çитсен пӳртре тутлă шăршă тухать... Пурнăç тутине ăнланнă самант».

Эпир пултарулла çамрăк çыравçа литература ĕçĕпе ӳлĕм те пысăк çитĕнӳсем туса пыма сунатпăр.

Чăннипех те, хальхи çыравçăсен çырас ăсталăхĕ Чылай урăхла. Публицистикăпа илемлĕ литература хайлавĕсен содержанийĕ паянхи пурнăçра хумхантаракан ыйтусемпе, пăтăрмахсемпе тӳр килет. Çавăнпа та вĕсене вулама интереслĕ.

Чăнах та, кирек хăш публицистика произведенийĕн те



вулакансемпе итлекенсене мĕн те пулин каласа е çырса пĕлтернисĕр пуçне вĕсен туйăмне хускатмалла, чун-чĕрине çĕклемелле. Людмила Сачкова статйисене вуланă май, радиокăларăмĕсене итленĕ май çакна туятăн, вăл ĕçре малта пыракан пирки каласа панă пулсан-пурнăçра çав ĕçчен пек пулма ĕмĕтленетĕн, унăн ырă сăнарĕпе хавхаланатăн,малтан мала туртăнатăн. Паллах,

çакна кичем те салху чĕлхепе çырнă статьяран, очеркран е корреспондецирен кĕтни кăлăхах: ун пек текста хавхаланса вулас вырăнне кирек кам та, кичемлĕх тыткăнне лексе, ыйхă килнĕ чухнехи пек, сĕнксе лара пуçлать. Сăнарлă та витĕмлĕ чĕлхепе çырнă материал вара, пачах урăхла, вулакан кăмăлне çĕклет, унта мĕн çырнине хăвăртрах вуласа тухма хавхалантарать. Публицистика чĕлхи витĕмлĕ те сăнарлă пулмалла тесе тĕпчевçĕсем палăртсах калаççĕ. Тĕслĕхрен, М.М. Михайлов кун пирки çапла çырнă: «Основная черта публицистического стиля - совмещение в нем некоторых особенностей научного: жудожественного и разговорного стилей. Элементы художественного стиля проявляются в публицистике в виде в ней изобразительно-выразительных средств языка: в виде стремления придать речи особую живость: эмоциональность и экспрессивность: образность».[1]

Людмила Сачкова хайлавĕсене вулакан яланах хапăлласа йышăнать, мĕншĕн тесен вăл çырса кăтартакан геройсем пурнăçран илнĕ, пире çывăх сăнарсем, вĕсен шăпи, кун-çулĕ, чун ыратăвĕ юнашар çынăнни евĕрех чуна хускатаççĕ, шухăша яраççĕ.Вĕсемпе пĕрле пăшăрханатăн,телейĕшĕн хĕпĕртетĕн. Сăнарлă шухăшлавĕ те Людмила Сачковăн хăйне евĕрлĕ. Вăл яланах çĕннине шырать. Халиччен каламаннине тĕпчевлĕн тишкерсе вулакан патне çитерет вăл. Л. Сачковăн пурнăç çулĕпе пултарулăхĕ, унăн публицистикăпа илемлĕ литература аталанăвне хывнă тӳпе пирки пĕр сăмахпа калама та çук. Тăван халăхăн ĕçĕ-хĕлĕпе шухăш кăмăлне, чун ыратăвĕсене нимрен мала хуракан ывăлĕ-хĕрĕсемпе паян республика чăннипех те мăнаçланать. Сачкова Людмила Николаевна-вĕсенчен пĕри. Людмила Сачкова чăвашлăха упраса хăварас, çитĕнекен ăрăва тăван чĕлхене юратма вĕрентес тĕлĕшпе пысăк ĕç тунă.

[1] Михайлов М.М. Двуязычие в современном мире. Чебоксары: Чуваш. гос ун-та, 1988. 69 с.

Публицистика наукăпа илемлĕ литература хушшинче тăракан хăйне евĕр литература тĕсĕ. Публицистăн вăйĕ хăйĕн шухăшĕсене наукăран илнĕ логика принципĕсене усă курса ĕнентерме пултарнинче. Наука принципĕсене тĕпе хурса ĕçлени, аргументсем тупса палăртни, ĕнентерни, пĕр-пĕр шухăш патне илсе пыни – публицистăн палăрăмлă енĕ. Çав вăхăтрах çак уйрăмлăха асăрхамалла: наука ытларах теорипе, публицистика паянхи кун практикипе çыхăннă. Публицистика тарăн шухăшлă, çивĕч сăмахлă пулмалла.

Ытти периодика изданийĕсемпе танлаштарсан, çакна палăртмалла: журналăн ĕçри тĕп мелĕ – пропаганда, хаçатăн – агитаци. Хаçат информацие оперативлă панипе палăрать, журнал – çав информацие тĕплĕнрех хак панипе. Журналта комментари ытларах.

Журнал тĕсĕсем тĕрлĕрен. Вĕсене классификацилес тĕп принцип-издани предмечĕ, функцийĕ тата вăл кам валли пулни. Журналсене сахалтан та пилĕк ушкăна пайлама пулать.

1) публицистика журналĕсем;
2) литературăпа художество тата публицистика журналĕсем;
3) наука тата теории журналĕсем;
4) техникăпа производство журналĕсем ;
5) наукăна халăха ăнланмалла пропагандăлакан журналсем;

«Тăван Атăл»-илемлĕ литературăпа публицистика изданийĕ. Ăна илемлĕ литература, обществăпа политика журналĕ тесе палăртнă. «Ялав» - «Тăван Атăл» пекех. Уйрăмлăхĕ-илемлĕ литературăн вак жанрĕсемпе ытларах пичетлени тата иллюстрацисем пурри. Çав вăхăтрах 1991 çултан «Тăван Атăла» слайдсемпе кăларма палăртнă. Хăй вăхăтĕнче журнал статусĕ мĕнле улшăнса пыни те интереслĕ. Аса илер-ха. «Ялав» журнал 1924 çултан пуçласа 1931 çулччен «Сунтал» ятпа тухнă. 1941 çулччен те статусне улăштарнă тĕслĕхсем пулнă.

Куратпăр ĕнтĕ, тĕрлĕ çулсенче тĕрлĕ статус журналăн. Ку вăл, пĕр енчен, журнал хăй сăн-сăпатне шырани çинчен калать, тепĕр енчен, самана палăрăмĕ те куçкĕретех.

«Тăван Атăлăн» та çавăн пекех истори. 1954 çулччен Чăваш совет писателĕсен Союзĕ Кăларакан альманах шутланнă вăл. Каярах-Чăваш писателĕсен Союзĕ кăларакан альманах, паян вара «Чăваш писателĕсен Союзĕ уйăхра пĕрре кăларакан илемлĕ литература тата обществăпа политика журналĕ» тесе палăртнă.

«Тăван Атăл», «Ялав» журналсем илемлĕ литература, художество тата публицистика журналĕсем. Журналистика общество пурнăçне туллин çутатать, политикăна çывăх тăрать, çавăнпа та «общественно-политический» тени публицистика пĕлтерĕшне палăрать.

Публицистика хăй пĕлтерĕшĕпе илемлĕ литературăран аякра тăрать теме пăхакансене тĕл пулатăн. Уйрăмах очерк жанрĕпе çак шухăша çирĕплетме тăрăшаççĕ. Пĕрисем ăна илемлĕ литература жанрĕ, теприсем публицистика жанрĕ теççĕ. Тĕрĕссипе,очерк «куçăмлă» жанр, шăп та лăп публицистикăпа илемлĕ литература хушшинче тăрать, литература икĕ тĕсне те пуянлатать. Хамăр чăваш литературине илес пулсан та, публицистика произведенийĕсенчен каярах повесть, калав, роман пулса кайнă тĕслĕхсем пур. Хаçат-журнал ĕçĕ пурнăçа туллин вĕренме хистет, пуян материалпа тивĕçтерет. Чылай писатель хăйсен пултарулăхĕнчи çул-йĕрне малтан хаçат-журналта ĕçлесе тупнинчен те килнĕ ку. Анчах та çыравçăсем çивĕч публицистика жанрĕсемпе çырнă текстсем яланах илемлĕ произведении пулман, хăйне уйрăм тĕслĕх пулнипех вĕсем вулаканшăн паха.

Мĕн çинчен çырма тивĕç-ха журналист? Халăх мĕн кĕтет, çавăн çинчен. Пурнăçа мĕн прогрессивлă майпа улăштарма пултарать, çавăн çинчен пĕтĕмпех çырма пултарнă Людмила Сачкова журналист.


Произведени витĕмлĕхĕ вăл мĕнле пултарулла çырнинчен килет те ĕнтĕ. Публицистика чи малтан – çивĕч шухăш, ăслă пĕтĕмлетӳ. Вăл информаци пухса халăх патне çитермелли хатĕр кăна мар-çке. Публицистика – общество пурнăçĕпе политика ĕçĕнчи питех те çивĕч хĕç-пăшал.

Людмила Николаевна «Хыпар» хаçатра ĕçленĕ хыççăн «Пике» журналăн пай пуçлăхĕнче вăй хурать. Унта та, кунта та хăй пултарулла иккенне кăтартса парать. Асăннă тапхăрсенче малтанхи калавсем республикăри хаçат-журналсенче пичетленсе тухса вулакансене хумхантараççĕ. Çапах та хаçатпа журнал хушшинчи уйрăмлăхсене те палăртма пултарăпăр. Чи палли – вулакансем патне информацие хăш издани маларах илсе çитерме пултарнинче. Кашни кун е эрнере пĕрре тухса тăнăран, хаçат оперативлăхĕ пысăкрах. «Пике», уйăхра пĕрре тухса тăнăран, информацие журналта тишкерме, вулаканпа сӳтсе явма майсем ытларах.

Сăмах ăстисем-писательсем илемлĕ публицистикăна аталантарассишĕн çине тăрса ĕçлессе кĕтет вулакан. Шел пулин те, пур çыравçă та хутшăнасшăн мар çак пархатарлă ĕçе. Хăюлăх та, çивĕч ăс-тăн та кирлĕ-çке публицистикăра. Ответлăхĕ те пысăк тĕрĕс, куçкĕретĕн каланă сăмахшăн. Енчен чун туртсан, вулакана калас тени пулсан, çыратăнах, паянхи «кăшкăракан» проблемăсене çĕклеме пикенетĕнех. Ку вăл çыравçăн та, журналистăн та пархатарлă тивĕçĕ.

Людмила Николаевна Сачкова – пултарулла журналист. Публицистăкăлла проза унăн пултарулăхĕнче тымарланать. «Мариванна» хайлав никĕсĕнче тарăнланса пыракан хитре аллегори, танлаштару выртать. Мари Иванна Сорокина – вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекенĕ - хăйĕн тивĕçĕсене туллин ăнланмасть. Ачасене тарăн пĕлӳ парас вырăнне хăйĕн шухăшне ĕнентерме васкать. Вăхăтне сая яма кăмăллать. Публицистикăлла хайлавра тĕрлĕ прозаик тĕрлĕ мелпе çырать. Сачкова хайлавĕсенче

рассуждени (шухăша ӳкни) мелĕ пысăк вырăн йышăнать. Людмила Николаевна публицистикин вăйлă енĕ – писатель сăмах еккине кирлĕ пек тытса пыма пĕлни. Чăн та, Сачкова тĕрлĕ описанисем тăвать, вĕсемпе геройсен чунĕнчи çав тери сисĕмлĕ хусканусене палăртать. Апла пулин те, писатель-публицистсен пĕрешкел поэтика мехелĕ пур, вăл – контраст, контрастлă эпизодсем (геройсем, лару-тăрусем) пĕр-пĕринпе тавлашуллăн аталанса пыни. 1981 çулхи «Тăван Атăл» журналта Людмила Сачкован «Тус алли яланах ăшă» статья пичетленет.



Людмила САЧКОВА

Тус алли яланах ăшă


Литература критики

Публицист Пушкăрт халăх поэчĕ Мустай Карим пултарулăхне пур енчен тĕпчет, статьяра автор Мустай Карим произведенийĕсенче ырă яланах усала çĕнтернине, тĕрĕслĕх çиеле тухнине, унăн юратнă

Национальная библиотека Чувашской Республики
Ч-30187

сăнарĕсем яланах çутă ĕмĕтлĕ, таса та тӳрĕ кăмăллă, тĕрĕслĕхпе чысшăн, ирĕклĕхшĕн кĕрешекенсен çынсем пулнине палăртать.

Пушкăрт халăх поэчĕ Чăваш çыравçисемпе нумайранпа туслă çыхăну тытнине, «Нарспи» поэмна хăйĕн тăван чĕлхине куçарнине, Петĕр Хусанкайпа, Ухсай Яккăвĕпе туслă çыхăну тытнине каласа парать. Сăмах май, Людмила Сачкова Мустай Каримран хăй те сахал



мар çыру илнĕ, вĕсем туслă çыхăнура пулнă.

Публицистикăн тĕрлĕ енĕсем Сачкован пурнăçа тĕпчесе пĕлнĕ чух мар, обществăри лару-тăрăва, йăла психологине сăнланă чух ăнăçлăрах. Текстри нумай енлĕ сăнлăхсем, метафорăсем, аллегори

пулни вулакана паянхи самана уйрăмлăхĕсемпе туллин паллаштараççĕ. Геройсем публицистăкăллă хайлаври пек мар, драмăри пек хăй халлĕн. Уйрăм сăнарсен чун таппи произведенире хăйне сăпатлă пулăма хывăнаймасть. Тен, ăна Сачкова юриех çапла тăвать пулĕ. Сăнарлă публицистикăшăн вара шăпах çакă кирлĕ те.

Публицистики хăйне евĕрлĕхĕ палăрать çыравçăн. Авантюрăллă çаврăнса пыракан ĕç-пуçа кăмăллать, ăнсăртран сиксе тухакан событисене килĕштерет. Символсемпе, аллегорисемпе чылай ăнăçлă усă курать. Публицистика ĕçĕсенче вĕсене пула илемлĕх анлăшĕ ӳсет, пĕтĕмĕшле идея тарăнăшĕ туллин палăрать. Людмила Николаевна – ăста журналист. Вăл «Пике» чăваш хĕрарăмĕсен журналĕн редакцийĕнче социаллă пай пуçлăхĕ пулнăран, хĕрарăмсен йывăрлăхĕсене, пурнăçра пăлхантаракан ыйтусене хăйĕн статйисенче туллин уçса парать. Акă манăн алăра 1992 çулхи «Пике» журналăн виççĕмĕш номерĕ. Ку номерте Людмила Сачкова хăйĕн статйине хушма ятпа кăларнă. «Чи малта – этем факторĕ» материала Л. Иракина ятпа пичетленĕ. Статьяна тишкерес пулсассăн журналист чĕлхи таса та тирпейлĕ, ырă вăрлăх пек тутă, тĕшĕллĕ, тарăн пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртмалла. Вулакансен кăмăлне кайни пурнăç пулăмĕсене, çынсен сăнарĕсене витĕмлĕн, куçа курăнмалла кăтартса, аса илнисене, пĕтĕçтернисене вичкĕн, реализмла, тĕп-тĕрĕс çырса сăнласа панинче курăнать. Содержани тĕлĕшĕнчен ырă та тĕрĕс туртăмлă, пурнăç чăнлăхĕпе, ырă шухăш-кăмăлпа палăрса тăраççĕ. Илемлĕ хайлавăн илĕртӳлĕхĕпе вĕрентӳлĕхĕ унăн содержанийĕнче çеç мар, пĕтĕм тытăмĕнче, сăнарлăх витĕмлĕхĕнче, стилĕнче те палăрать. «Çамрăксем тĕрлĕ коллектива лекеççĕ, малтанах чылайăшĕ йывăрлăха кĕрсе ӳкме пултарать, ĕçрен ютшăнса-писсе ан кайччăр тесе, вĕсен çумне наставниксем çирĕплетеççĕ» – тет автор статьяра. Шутласа çырнă, кашни сăмахне хăйĕн вырăнне лартнă журналист. Пир-авăр комбиначĕн ĕçĕ-хĕлне туллин çутатса панă, кăтартусемпе

усă курнă. Статьяна вуласа тухнă хыççăн чылай вулаканăн çак предприятире ĕçлес туртăм çуралнă пулĕ. Апла пулсассăн журналист сăмахĕ витĕмлĕ.

«Ялав» журналти «Пĕр тумламра-пĕтĕм тинĕс» статья çинче те чарăнса тăрас килет. Сăмах-çĕнĕ хайлавсене критик куçĕпе хакласси пĕр вăхăт пĕтсе пыни пирки. «Çакă, паллах, вĕсенче çитменлĕхсем çуккине пĕлтермест. Тĕрĕссипе, паян кун критик куçĕпе пăхакансем, тивĕçлĕ хак пама пултаракансем çуккипе те çыхăннă ку» - тенĕ статьяра. Ыйтăва тĕрĕс татса парас шутпа ăсчахсем пысăках мар ушкăнпа çĕнĕ хайлавсене тишкерес, хаклас ĕçе çĕнĕрен пуçланă иккен. Тĕпчевçĕсем Людмила Сачкован «Чĕкеçĕм, чĕкеç» кĕнекине алла илнĕ. Филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ Виталий Петрович Никитин-Станьял сăмахĕсемпе паллаштарас килет: «Сăмахлăх тĕпелĕн черетлĕ ларăвне пуçлатпăр. Калаçу йӳтĕмне эпĕ çапла палăртрăм: «Людмила Сачкован «Чĕкеçĕм, чĕкеç» кĕнекине тишкересси». Калаçăвăн эпиграфне çакăн пек палăртас тетĕп: «Чăваш хĕрупраçĕпе арăмĕн пурнăçĕпе ăраскалĕ пирки шухăшламан сăвăç е çыравçă çук. Тĕнче ӳнерĕн чи паллă хĕрарăмĕсен сăнарĕсемпе юнашар тăма тивĕç чăваш хĕрарăмĕсен сăнарĕсем те пур. Аса илĕпĕр: Нарспипе Варуççи, Пинерпипе Елюк, Селимепе Уках, Чинавье инкепе Салампи тата ытти сăнарсем те. Людмила Сачкован кĕнеке ятне панă «Чĕкеçĕм, чĕкеç» повеçĕнчи Рая Ласточкина сăнарĕ çавсене йăлтах аса илтерчĕ. Ашшĕ-амăшĕ Чĕкеç кайăк пек чипер пăхса ӳстернĕ чĕвĕл-чĕвĕл чĕлхеллĕ чипер чун-тĕнче илемĕпе сăвĕпа-повеç вĕçĕнче ăшра питĕ хытă пăшăрхану хăварать. Телейсĕр унăн пурнăçĕ, илемсĕр унăн кун-çулĕ. Тата ытла та вăхăтсăр, юрăхсăр татăлать вăл. Мĕншĕн? Хăйсем ухмаххипе-и е тĕнчипе самана çав тери тăрлавсăррине пула-и?

Сăмах тĕпелĕн йăлине тытса пырса, автор çинчен пĕр-ик сăмах калам: Людмила Николаевна Сачкова пултаруллă журналистка,

çыравçă. Патăрьел районĕнчи «Авангард» хаçатра, унтан «Ялав», «Тăван Атăл», «Çилçунат», «Пике» журналсенче пичетленнĕ. Вăл халăх юхăмне те хастар хутшăнать,- чăваш халăхĕн культурăпа политика центрне йĕркеленĕ чухне тата Чăваш наци конгрессĕн ĕçĕсенче хăйĕн сăмахне калама тата хăйĕн ĕçне тума пултарать. Тăван сăмахшăн, халăх ĕçĕшĕн Людмила Сачкова вута та, шыва та кĕме хатĕр тесе çирĕплетсех калатăп. Виталий Станьял Людмила Сачкован пултарулăхне пысăка хурса хакланине çирĕплетеççĕ çак сăмахсем. Чăнах та, сăмах ăсти статьясене пуçлама та, вĕçлеме те, тытăмне йĕркелеме те, хăйĕн чĕлхине тупма та, детальсемпе пуянлатма та пĕлет.

1.2. «Тăван ен» хаçатра пичетленнĕ материалсен пахалăхĕ

«Радио-самантлăх, хаçат пĕр кун кăна пурăнать» -теççĕ халăхра. Хаçат вăл - çыравçă чунĕпе вулакан кăмăлне тӳрремĕн çыхăнтаракан çул. Страницăри кашни йĕрке вулакана киревсĕр шухăшран пăрса ырă ĕçе явăçтарма пултартăр - çак тĕллеве паянхи кун та пурнăçлать «Тăван ен» хаçат коллективĕ.

Шупашкар районĕн хаçачĕ 1932 çулхи утă уйăхĕн 27-мĕшĕнче тухма тытăннă. Малтан вăл «Колхоçнĕк çулĕ» ятпа вулакан патне çитнĕ, пĕрремĕш редакторĕ П. М. Ростов пулнă. Хаçат ячĕ тăхăр тĕрлĕ улшăнать, 1992 çулхи юпа уйăхĕн 10-мĕшĕнчен «Тăван ен» ятпа тухса тăрать.

Хăшĕ-пĕри кайăксем пĕлĕтелле хăпармаççĕ тесе тавлашма пăхĕ. Ун пек мар иккен.

80 çул каялла «Колхоçнĕк çулĕн» пĕрремĕш номерне хатĕрлесе калăплакансем вăл Шупашкар район историйĕн летописне çавăн чухнех пысăк сас паллисемпе çырăнса юласси пирки шухăшламан та пулĕ. Сакăр теçетке хушшинче хаçат сăн-сăпачĕ палламалла мар

улшăннă – тĕсленнĕ, илемленнĕ, çивĕчленнĕ. Шупашкар ен тĕкĕрĕ пулса тăнă. Вулакан паян алла тытакан хаçат – журналистика анин сухаçисем ырма пĕлмесĕр тăрăшса, тарпа шăварса çитĕнтернĕ пархатарлă çимĕç. Ăна пин-пин киле çитерекен хыпарçă-кăвакарчăнсем каллех вĕçеве çĕкленеççĕ. «Тăван Ен» редакци кăмакинче район хаçатĕнче çĕнĕрен те çĕнĕ номерсем пиçсе тухаççĕ.

– Алло! Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерстви-и? «Тăван Ен» корреспонденчĕ Сачкова чăрмантарать. Пире Çĕнĕ Шупашкар çывăхĕнчи хытă каяшсен полигонĕн строительствипе çыхăннă информаци кирлĕ, – ĕç кунне республика ведомствин чиновникĕсене тĕпĕртеттернипе пуçланă Людмила Николаевна. Вырăнти хăй тытăмлăхпа социаллă политика пайĕн редакторĕ Людмила Сачкова ватăпа ватă пек, çамрăкпа çамрăк пек калаçма пĕлекен журналист.

Унăн «Шăнкăрч сассиллĕ Шĕмшер» статйинче эпир Шупашкар районĕнчи Шĕмшер ял тăрăхĕнчи çут çанталăкпа çывăх пурăнни пирки, «Цивилизаци ырлăхĕ майлă» ĕçре - Шупашкар районĕнчи экологи проблемисем çинчен вуласа пĕлме пултаратпăр.

Хаçат чĕлхин паха енĕ - уçăмлăх, урăхла каласан, вулакан унта мĕн çырнине пуçа ватмасăрах, çăмăллăнах ăнланма пултарни. Унăн статйисене тишкернĕ май, тĕрлĕ тематикăлла ĕçсемпе тĕл пулма тиврĕ. Пĕр статьяна та ячĕшĕн çырман вăл, кашнинех интересленсе кайса вулатăн, çĕннине пĕлетĕн.Эпĕ сăнаса пынă тăрăх, Людмила Сачковăн ансат та уçăмлă чĕлхепе çырнă материалсем пичетленнĕ.

Явăшра ял уявĕ иртнĕ пирки, Алевтина Кирилловна пенсионерка пирки пичетленсе тухнă заметкăсемпе паллашма та кăмăллă пулчĕ.

Чăваш наци радиовĕнче вăй хунă Ксения Алексина Людмила Сачкова журналист ĕçĕ-хĕлĕ пирки акă еплерех каланă: «Тăван Енре» кăсăклă материал нумай, «Пытармасăр» рубрика чуна çывăхрах.

Политика та, ял пурнăçĕ те сăнарланать. Усăллă канашсене те юратса вулатăп».

Людмила Сачкова «Тăван Ен» хаçат редакцийĕнче ĕçленĕ хушăра тĕрлĕ информацисем пичетленипе çеç çырлахман, анализ тунă материалсем те пама тăрăшнă. Кашни статьярах пĕр тĕп шухăша тикĕссĕн аталантарса пыма, проблемăллă çивĕч ыйтăва татса пама тăрăшнă. Çакна та палăртмалла: Л. Сачкова журналист корреспондеци жанрĕнче уйрăм фактсенчен пуçласа пĕтĕмлетнĕ вывод патне пынă, çав фактсен пĕлтерĕшне ăнлантарса панă. Çĕр чăмăрĕ çинче, уйрăм çĕр-шывсенче, хамăра çывăхри тăрăхра мĕн пулса иртнине çийĕнчех хаçат çырса пĕлтерет. Калăпăшĕ пĕчĕк, пĕлтерĕшĕпе пысăк заметка пичетленнĕ Людмила Николаевнăн.

«Уйрăм çын витĕр истории курăнать» статья «Тăван ен» хаçатра 2014 çулхи чӳк уйăхĕн 14-мĕшĕнче пичетленсе тухнă. Унта журналист Юрий Владимирович Гусаровăн наукăри тĕп çул-йĕрĕн темисене уçса панă, унпа ăслăлăх ĕçĕ пирки кăна мар, кун-çулĕ çинчен те калаçу пуçарнă. Ыйтусене тĕрĕс йĕркелеме пĕлнипе палăрать публицист, анлă-тавра курăмлă пулни те сисĕнет.

Людмила Сачкова Шупашкар районĕн «Тăван Ен» хаçат редакцийĕнче чылай çул хушши ĕçленĕ. Çак хаçатра паллă та сумлă çынсемпе калаçусем ирттерсе «Шупашкарт» ярăм йĕркелесе пынă. Мĕнлерех тытăмласа пынă-ши çак кăларăма журналист? Статья пуçламăшĕнче «Пытармасăр» рубрика пур. Апла «Шупашкарт» хăнисем журналистпа чунне ирĕке ярса ним пытармасăр калаçаççĕ, хăйсен шухăшне палăртаççĕ. Тĕслĕхрен, Юрий Николаевич Исаев ăсчахпа ирттернĕ калаçу пирки çырса кăтартнă статьяна шĕкĕлчер, тытăмĕпе паллашар. Статья ятне тарăннăн шутласа панă автор – «Наука çупçи пуян» тенĕ. Юрий Николаевич Исаевпа паллаштаракан досье материал пуçламăшĕнче. Досьере ашшĕпе амăшĕн ячĕсене те, вĕсем кам пулнине те пĕлме тивĕç вулакан. Досье хыççăн

журналистпа кăларăм хăни хушшинчи калаçу. Ыйту çине хурав. Ыйту лартма пĕлет Людмила Сачкова, шухăша та аталантарса пыма ăста. Ыйтăвĕсем сăмах хускатас тĕллевпе мар, тĕрĕс те тарăн хуравлă пулччăр тесе панăскерсем. Прессăна кирлĕ информаци пама пултаракан авторитетлă çынсемпе калаçма тивĕçлĕ журналист, халăхăн шухăш-туйăмне тĕрĕс палăртса пĕлтерет. Интервью ĕнентерӳллĕ, тĕллевлĕ. Интервью вĕçĕнче журналист пĕтĕмлетӳ тăвас тĕллевпе ăсчахран малашнехи ĕмĕчĕсем пирки те тĕпчет, паллах, хуравне те кĕтсе илетех. Опычĕ пуян, журналист пулма çуралнă тесе калас килет Л. Сачкова пирки.

Хальхи вăхăтра Людмила Сачкова Чăваш патшалăх гуманитари наукисен институтĕнче тăрăшать.

1.3. Чăвашрадиора янăранă хайлавсен ăсталăхĕ

Л.Н. Сачкова сасси чăвашрадиора та илтĕнсе каять: ачаш, лăпкă, итленĕçем итлес килекен сасă. Радиопублицистикăра тĕп вырăнта – илтĕнекен сасă, кĕвĕ, пулăмсемпе событисем пирки тӳрреммĕн калама пултарни. «Шураппа» кăларăм пурин кăмăлне те каять. Чăваш хĕрарăмĕн паттăрла е тепĕр чухне куçа курăнман ĕçне, чун илемне, тасалăхне, чăтăмлăхне, чăн-чăн Амăш сăнарне радио хумĕ çине кăларнă вăл. Кашни Шураппийĕ – уйрăм çын. Пирĕн хушăрах шăппăн та пысăккăн ĕçлеме, ытлашши шав тумасăрах шавлаттарма пĕлекен чăваш хĕрарăмĕсемпе паллаштарнă çак кăларăмра. Чăвашрадиора литература пайĕн редакторĕнче тăрăшнă. Унта литература, искусство, тĕн, краеведени, философи, хĕрарăмсен ыйтăвĕсене хатĕрлекен

передачăсем эфирта вĕçĕмсĕрех янăранă.[2] Кăларăма тĕрлĕ çĕрте тăрăшакан, хăйсен ĕçне парăнса ĕçлекенсене йыхравланă. Роза Деменцовăпа ирттернĕ кăларăма итлеме пушшех кăмăллă пулчĕ. Шухăша тарăнлатма, анлăлатма пултарать журналист, калаçăва тытса пыма ăста, калаçу çăмхи тирпейлĕн сӳтĕлсе пырать. Хăнана та лăпкă, калас шухăшне калама нимĕн те чăрмантармасть. Людмила Сачкова журналистикăра та пултаруллă пулнине ĕнентерсе парать çак тĕслĕх.

Людмила Сачкова халăхăмăра çутта кăларакан Аслă çыннăмăр – Иван Яковлев тата вăл хăварнă халал çинчен хатĕрленĕ кăларăм та çӳллĕ шайра пулнине каламалла. Çакна та палăртмалла, ку кăларăм пĕлтерĕшĕ паянхи кун татах та ӳсет. Мĕншĕн тесен вăл пире хамăрăн тепĕр аслă çыннăмăрăн – халăх педагогикине никĕслесе тĕнчипе палăрнă Геннадий Никандрович Волков академикăн пурăннă чухне çырса юлнă ыр сунăмне итлесе ăша хывма май парать. Çур сехете яхăн пыракан передачăра журналист ыйтăва туллин çутатать, лăпкăн калаçать. Иван Яковлев халалĕн сыпăкĕсене илсе кăтартни те кăларăма илем кӳрет, кăсăклантарса ярать. Л. Сачкова кăларăма хатĕрленĕ май, чăвашсен паллă этнопедагогĕпе, «Патриархăмăр кунçулĕ» кĕнеке авторĕпе – Г.Н. Волковпа курса калаçнă, унăн шухăшĕсене пĕлнĕ. Тĕрĕс ыйтусем лартать Людмила Николаевна. «Кĕнекене мĕнле тĕллевпе çырнă: унăн пурнăçне туллин кăтартса парас тенĕ-и е унăн ĕçне хакласа халăхшăн мĕнле пĕлтерĕшне палăртас тени тĕп вырăнта пулнă-и?» – тесессĕн Геннадий Никандрович: «Эсĕ çак ыйтăва хăвах хуравларăн. Питĕ тĕрĕс, питĕ лайăх. Ку та, вăл та пулнă» – тет. Апла пулсассăн, журналист вырăнлă ыйтусем пама пĕлет, калаçу çăмхине тĕрĕс сӳтме пултарать.

---

[2] Мышкинаĕ А. Çĕнĕ ĕмĕрĕн сăнарĕ тăван литературăра Тăван Атăл. 2003. 10 №. 64 с.

– Эфирта «Учитель сăмахĕ» кăларăм! Ăна эпĕ, Людмила Сачкова, ертсе пыратăп – çапларах пуçланă хăйĕн çĕнĕ кăларăмĕсене журналист. Пултаруллă вĕрентекенсем пирки каласа панă çак передачăра. Акă, Шупашкар хулинчи 59-мĕш шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Галина Васильевна Абрамова, 6-мĕш шкулти Людмила Ивановна Васильева, 56-мĕш шкулта Галина Николаевна Николаева вĕрентекенсемпе ирттернĕ калаçусем радиоитлекенсене кăсăклантарма пултарнă.

Людмила Сачкова кĕçĕн çулхи ачасем валли «Шăпăрлан» радиопередача та хатĕрлесе ертсе пынă. Кăларăмсенче ача сачĕсен кулленхи ĕçĕ-хĕлĕ пирки каласа панă, ачасемпе хăйсемпе те калаçу пуçарнă. Ачапа ача пек калаçма пултарать журналист. Ыйтăвĕсем те шăпах та ача хуравлама пултараканнисем. Шăпăрлансем сăвă-юрăпа та тыткăнлаççĕ кăларăмсенче. Çак кăларăмсем ача-пăчана çеç мар, кирек темле ӳсĕмри радиоитлекенсене те килĕшнĕ, савăнтарнă.

2002 çулта мĕнпур массăллă информаци хатĕрĕсен хушшинче Республика шайĕнче ирттернĕ конкурсра культурăпа искусство темисене çӳллĕ шайра çутатнăшăн виççĕмĕш вырăна тивĕçнĕ Людмила Сачкова.

Çавăн пекех Чăвашрадио 2001 çулта 75 çулхи юбилейне паллă тунă май, «Чăваш Ен» Патшалăх Телерадиокомпанийĕн Хисеп Хутне те тивĕçме пултарнă.

Людмила Николаевна Сачкова Чăвашрадиора «Тавра пĕлӳ ыйтăвĕсем», «Аякри тăвансем. Диаспора» кăларăмсене йĕркелесе ертсе пынă. Тутарстанра тăхăр хутччен пулнă. Пушкăрт, Самара, Сарă ту облаçĕнче, Мускавра, И. Я. Яковлев шкулĕнче нумай пулнă. Çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенче чăвашсемпе курса калаçнă вăл, вĕсен илемлĕ юрри-ташшине çырса илнĕ, вĕсемпе халăха радио урлă паллаштарнă. Итлекенсен юратнă передачисем пулса тăнă унăн ярăмĕсем. Çĕр-шыв тăрăх сахал мар çӳренĕ публицист, ытти

регионсенче пухнă опыта сарас ĕçре самай хăйне çул-çӳрев кăларăмĕсем урлă паллаштарнă.

Культура темине çутатса панисĕр пуçне, Людмила Сачкова информаци передачи те хатĕрленĕ. Ку кăларăм «Кунсерен» ятлă пулнă, эфира ирхи 6 сехетре тухнă.Тĕрлĕ ыйтăва татса пама хăнăхнă журналист сĕт хакĕ пирки кăларăм хатĕрлес тенĕ, лавккара сĕте хаклă хакпа сутни, ял çыннисенчен вара йӳнĕпе пуçтарни шухăшлаттарнă ăна. Унсăр пуçне çулталăк-çулталăк çурă ял ĕçченĕсем, хуçалăхсем укçа илейменни те пăшăрхантарнă. Людмила Сачкова кăларăм хатĕрлес тата ыйту çине хурав тупас тĕллевпе малтан сĕт пуçтаракан усламçăсемпе, ферма ĕçченĕсемпе, зоотехниксемпе, ял çыннисемпе, каярах сĕт завочĕн ĕçченĕсемпе калаçнă. Кирлĕ ыйтăва хускатма пултарнă журналист, ку ыйтупа вăл сахал мар вăхăт ĕçленĕ, гастрономсене çитсе сĕт хакĕпе паллашнă, ял хуçалăхне, çынсене лекмелли тупăш ăçтарах çухалнин сăлтавне те пĕлес тенĕ. Заводра укçа-тенкĕне банка куçарнă тесе ĕнентернĕ, журналист кăларăм хатĕрленĕ. Передача эфира тухни усăсăр иртмен - ку ыйтăва Аслă пухура сӳтсе явнă, депутатсем сĕт хакĕ пирки калаçнă. Тӳрех банкпа çыхăннă, банк ĕçченĕсенчен те Людмила Сачкова интервью илнĕ. Журналист пуçарулăхĕпе ыйтăва туллин татса пама тӳр килнĕ.

Пурнăçра татса паман ыйтусем чылай. Вĕсен сăлтавĕсем те тĕрлĕрен. Пирĕнтен килменнисем те пур. Нумайăшĕ вара хамăр айăпа пула тăтăшах тĕл пулать. Çавăнпа радио передачисенче общество пурнăçĕн çивĕч ыйтăвĕсене ытларах хускатас пулать. Вĕсенчен пăрăнса иртни, çитменлĕхсемпе кăлтăксене пытарни, йывăрлăхсем пирки шарламасăр тăни пулмалла мар. Паллах, лайăх пулма ырă тĕслĕхпе вĕрентес пулать. Аваннине аван, тесе, усаллине-япăх ку, тесе. Итлекене хăйне шухăшлаттармалла. Ыррине вĕрентмешкĕн пурнăçра лайăххи темĕн чухлех; Пуринчен малтан ĕç тата вăрçă ветеранĕсен, ĕç çыннисен пурнăçĕ пахаран та паха тĕслĕх пулса

тăрать. Çавăнпа та вĕсем çинчен чуна пырса тивмелле каласа памашкăн тăрăшмалла. Çын мĕн ачаранах тĕрĕслĕхшĕн кĕрешме хăнăхтăр. Чăн-чăн патриот пултăр. Çапла, радион общество умĕнче ответлăхĕ пысăк.

Журналист таланчĕ вăл – тăрăшни, вăй хуни, пултарулăха аталантарни, чунтан çĕкленсе, чĕререн хавхаланса кайни, асамлă «вуткайăка» тытса илме пултарни. Пурнăç яланах – шырав, аталану, малтуртăм. Радио та малти вырăна çынлăх, халăхлăх принципĕсене лартни – самана ыйтниех.

«Эпĕ хамăн профессине чунтан юрататăп. Мĕн пĕчĕкренех ĕмĕтленсе ӳснĕ журналист пулма. Вĕренсе те тухнă, шкулта та ĕçлесе курнă, хаçат журналсенче вăй хунă, телевиденире те кăларăмсем йĕркелесе пăхнă, анчах та радиожурналист ĕçĕ шăпах та манăн пурнăç ĕçĕ пулнине вăхăт иртнĕçемĕн çирĕпех ăнлантăм. Ку ĕçе юратмасан, кунта тытăнса тăраймастăн: пĕр вĕçĕм командировкасем, çине-çинех тата питĕ хăвăрт передачасем йĕркелесси çăмăл ĕç мар. Анчах эпĕ ăна савăнсах тата юратсах пурнăçлатăп. Çул çӳреме те питĕ юрататăп. Инçе çĕрсемпе тата халиччен курман çынсемпе паллашса чун та, ăс-хакăл та пуянланать - манăн передачăсем те пуянрах пулаççĕ. Эпĕ тата, писатель пулнă май, çул çӳревсенче хамăн пулас произведенисем валли материал пухатăп.

Асăну мемориалĕ Тутарстанри Кăнна Кушки ялĕнче чăвашсен аслă патриархĕ И. Я. Яковлев ячĕпе çĕкленнине те хам куçпах куртăм. Эпир малтанхи хут кайнă чухне Кăнна Кушки истори хăйĕн лавĕ çинчен ӳкерсе хăварнă ял пек туйăннăччĕ, çурчĕсем мунча пек, пĕчĕк, тăррине мăян шăтнă, урамĕсем хушшине пĕç тĕп таран атă тăхăнмасăр кĕме май çукчĕ... Чăвашсен ултă писателĕ çуралса ӳснĕ çак ялта. Тепĕр çур çултан çак яла килсен, паллама май çукчĕ - ял хушши - асфальт, кив çуртсене ишсе çĕнĕрен çĕкленĕ, ыттисене

юсанă, клуб, часовня тата шкул çĕнĕрен тунă тейĕн - йăлтах паянхи кунри самана килсе çитнĕ Кăнна Кушкине.

Çеçпĕл Мишши асăну мемориалне çĕкленине те хамăн куçпах курса тăтăм. Çын алли, çын шухăшĕ тем те тума пултарать иккен. Çеçпĕл ятне те, чăвашла та мана пуçланă ялта халĕ çынсем çулăмлă поэтăн кашни сăмахĕ мĕн хака тăнине те ăнланчĕç пулĕ тетĕп. Инçе çĕрсем мана яланах илĕртеççĕ - шухăш виçесĕрлĕхĕпе, тĕнче илемлĕхĕпе, професси тивĕçĕпе.» - тесе каласа панă Людмила Сачкова 2001 çулхи «Хăй те вăл-Шураппа» статьяра.

Чăвашрадиора 13 çул ĕçленине палăртрăмăр. Çак тапхăрта вăл «Шураппа», «Литература салонĕ», «Таврапĕлӳ ыйтăвĕсем», «Аякри тăвансем патĕнче», «Профессор кафедри», «Халăх театрĕ» кăларăмсем хатĕрлесе, ертсе пынă. Радиокăларăмсене çĕнетсе, пуянлатса пырас ăсталăхпа палăрса тăнă, пĕрле ĕçлекенсем унăн хăвăртлăхĕнчен, ĕçе тĕплĕ те вăхăтра тума пултарнинчен тĕлĕннине пĕлтереççĕ.

II ПАЙ. ЛЮДМИЛА САЧКОВАН ПРОЗĂРИ СĂНАР ТĂВАС ĂСТАЛĂХĔ

2.1. «Чĕкеçĕм, чĕкеç...» кĕнекери хайлавсен илемлĕхпе стиль уйрăмлăхĕсем

Писатель вăйĕ – илемлĕ сăнарсем калăплама пĕлнинче. Çыравçă общество пурнăçне пур енлĕн сăнарлать, çав вăхăтрах илемлĕ литературăн элеменчĕсемпе туллин усă курать. Сăмах ăстин чĕлхи çепĕç те чăн чăвашла, пуян, техĕмлĕ. Психологилле литература портречĕсем Чехов сăнарĕсем енне туртăнаççĕ.

Людмила Сачкова пултарулăхĕ калав ăсталас тĕлĕшпе палăрса тăрать. Тĕпрен илсен, унăн геройĕсем – йывăр шăпаллă, инкек хуçнă çынсем. Çав вăхăтрах телейлĕ самантсене те автор туйса, çепĕç чĕлхепе çырса кăтартать. Çакăнта ĕнтĕ унăн ăсталăхĕ.

Хальхи чăваш литературинче кăмăл-сипет ыйтăвĕсемпе çыхăннă проблемăсем тĕп вырăн йышăнаççĕ. Ăслăлăх литературинче ку ăнлава вырăсла «нравоописательная», «этологическая», юлашки вăхăтра «социокультурная» терминсемпе палăртни тĕл пулать[3]. Проблема тĕсне палăртни авторăн хăйне евĕрлĕхне, вăл пурнăçри пулăмсем çине мĕнлерех шухăш-кăмăлпа пăхнине, пĕр ăна çеç тивĕçнĕ енĕсене тупса палăртма май парать. Проблема авторăн çырулăхри паспорчĕ теме те пулать. Людмила Сачкова хăйĕн хайлавĕсенче кăмăл-сипет проблемисене тĕпе хурать, ăна пурнăç çулĕ çине тухма хатĕрленекен хĕрсемпе каччăсен, çамрăк мăшăрсен çемьери хутшăнăвĕ, ял çыннисем эрех-сăрапа иртĕхни канăççăрлантарать.

[3] Анализ литературного произведения / Под. ред. Л. И. Емельянова. Л.: Наука, 1976. С. 213.

Людмила Николаевна прозинче туйăмлăх, эмоципе хавха, лирикăллă сисĕм-сунăм вăйлă палăрать. Çакăнпа пĕрлех этем кун-çулĕнчи «тискерлĕ пурнăç» та çыравçă сăнланинчен курăнать. Вăхăт синкерлĕхне этем чун-чĕри витĕр кăтартса парас тĕлĕшпе вăй хурать вăл. Çыравçă хайлавĕсенче автор сăнарне кăткăслатать. Вĕсенче юмахлатса-шахвăртса сăнлани, «тăн пăтранни» меслечĕпе усă курни тĕл пулать.

Людмила Сачкова пурнăçра ытларах вăрман илемне, çул çӳреме, паллашма юратать. Çыравçăна çын хăйне евĕрлĕ пулни кăсăклантарать, уйрăм самантсенче тĕрлĕ лару-тăрура мĕнле тыткалани шухăша ярать.

Писатель шухăшĕпе, паянхи пурнăçа ватă çыравçăсем сăнласа каясшăнах мар, час-час иртнĕ самана пирки сăмах пуçараççĕ: Совет тапхăрĕ, вăрçă çулĕсем çинчен хайлавсем йĕркелеççĕ. «Паянхи пурнăç çинчен очерк çеç çырма пулать. Ăна вăхăт май килĕ», – тенĕ Л. Сачковăна Г. Краснов писатель. Сачкова вара кулленхи пурнăç пирки паян çырать, хальхи саманари çынсене хумхантаракан ыйтусене çĕклет. Вăхăт синкерлĕхне этем чун-чĕри витĕр кăтартса парать. Çакă хайлавсен хăйне евĕрлĕхне палăртать те. Тишкерсе тухар-ха, тĕслĕхрен, унăн 1996 çулта пичетленсе тухнă «Чĕкеçĕм, чĕкеç...» кĕнекине кĕнĕ хăш-пĕр хайлавĕсене. Унта вун пилĕк калавпа икĕ повесть кĕнĕ. Калăпăшĕпе пысăках мар пулин те хайлавсенче авторăн шухăш-кăмăлĕ уçăмлă курăнать. Хăйĕн пĕрремĕш кĕнекинче çамрăк çыравçă паянхи ял пурнăçĕн нуши-терчĕ çинчен пăшăрханса çырать, тĕрлĕ вак-тĕвеке те шухăшлавçă куçĕпе пăхса хаклама тăрăшать, пачах та кĕтмен çĕртен пĕтĕмлетӳсем тăвать.

Чăваш хĕр-упраçĕпе арăмĕн пурнăçĕпе ăраскалĕ пирки шухăшламан çыравçă çук. Тĕнче ӳнерĕн чи паллă хĕрарăмĕсен сăнарĕсемпе юнашар тăма тивĕç чăваш хĕрарăмĕн сăнарĕсем те пур. Аса илĕпĕр: Нарспипе Варуççи, Пинерпипе Елюк, Селимепе Уках,

Чинавье инкепе Салампи тата ытти сăнарсем те. Людмила Сачкован «Чĕкеçĕм, чĕкеç...» повеçĕнчи Рая Ласточкина сăнарĕ çавсене аса илтерет. Ашшĕ-амăшĕ чĕкеç кайăк пек чипер пăхса ӳстернĕ чĕвĕл-чĕвĕл чĕлхеллĕ чипер чун – тĕнче илемĕпе сăвапĕ – повеç вĕçĕнче ăшра пăшăрхану хăварать. Телейсĕр унăн пурнăçĕ, илемсĕр унăн кунçулĕ. Тата ытла вăхăтсăр, юрăхсăр татăлать вăл. Мĕншĕн? Хăйсем ухмаххипе-и е тĕнчипе самана çав тери тăрлавсăррине пула-и? Повеçре паянхи пурнăç, паянхи çынсем уççăнах курăнса тăраççĕ. Хайлаври ӳкерчĕксем ялти çамрăк мăшăрсен юратăвĕпе кĕвĕçӳлĕхĕ эрех-сăрапа хутăшса лайăх мăшăрсене çынлăхран кăларнине сăнлаççĕ.

Автор хаклавĕсĕр илемлĕ хайлав пулма пултараймасть. Тепĕр чухне вĕсем тӳрех, куç умĕнчех, йĕркеленсе пыраççĕ. Л. Сачкова «Чĕкеçĕм, чĕкеç...» повеçĕнче Рая Ласточкина шкул пĕтернĕ-пĕтерменех кавча тухса патак çисе пурăннишĕн тата унăн çамрăк ĕмĕрĕ вăхăтсăр татăлнăшăн пăшăрханни, кулянни палăрать. Алюш Райăна вăрласа кĕнĕ хыççăн автор хăйĕн позицине пытармасăрах çакăн пек фраза кĕртет: «Пĕлмест-ха хальллĕхе Рая кĕçĕрхи каç куççуль çулĕн пуçламăшĕ çеç иккенне». Повеçĕн сюжет аталанăвĕнче Райăн чăнах та сахал мар усал сăмах илтме те, упăшкин патакне çиме те тивет. Алюш вара, кĕвĕç чунлă, кăра характерлă пулса пархатарсăр сăнар шутне кĕрет. Хайлаври сăнарсене «ырă» тата «япăх», «пархатарлă» е «пархатарсăр» тесе пайлани пĕлтерĕшлĕ мар. Мĕншĕн тесен чăн пурнăçран илнĕ сăнар-характерăн лайăх тата япăх енĕсем те пулма пултараççĕ. Рая Ласточкинан кавча тухиччен те, кавча тухсан та, çынлăхран тухиччен, лайăх енĕсем пурри курăнать. Автор хак панă тăрăх: «Рая яланах капăр та типтерлĕ». «Кăшт çăмăлттайрах та вĕçкĕнрех пулин те, Рая хăйĕн савнине курсан» именме пĕлет. «Уçă та çăмăл кăмăллăскер, сăнран ытла чиперех пулмасан та, яланах килĕшӳллĕ, капăр тумланаканскер, çиççе-кулса

сиккелесе çеç çӳрекенскер, пурин кăмăлне те каять вăл»[4]. Çакăн пек çырса кăтартнинче, паллах, писатель хăйĕн тĕп геройне мĕнлерех кăмăл-туйăмпа хаклани те курăнать.

Повеçĕн хавхи драмăллă, анчах та хайлав вĕçĕнче трагедиллĕ хавха сĕмне илет. Рая Алюша качча тухнă хыççăн пĕр ырă кун та кураймасть, тамăка лекнĕ тейĕн: упăшки пĕрмай кĕвĕçет, вĕçĕмсĕр хĕнет. Икĕ ачаллă хĕрарăм хĕн-асапа тӳсеймесĕр юлашкинчен хăй çине алă хурать. Рая Ласточкина сăнарĕ вара сентиментализмпа трагизм хавхисене пĕрлештерсе тăрать.

Чăваш илемлĕ литературин аталанăвĕнчи сăнар тăвас, çав сăнарсен сăн-сăпатне сăнлас енчен пăхсан пирĕн çыравçăсем чылай пысăк ӳсĕм, çитĕнӳ туни курăнать. Илемлĕ литературăра сăн-сăпата сăнланин чи анлă сарăлнă мелĕ вăл – çырса сăнлани. Нумай чухне çак мел автор характеристикипе тӳр килет.

Л. Сачкова Рая сăнне акă мĕнле курса хаклать: «Рая çивĕч, вĕçсе-чупса çӳрекен хĕр. Сăпсанни пек çинçе пилĕкне пиçĕххипе çатăртаттарса туртса çыхать, кĕске те хутламлă-хутламлă кĕпе тăхăнма юратать. Кăтра çӳç хӳрийĕ, кĕске те сарлака кĕпе аркийĕ такама йĕкĕлтенĕн йăлт та ялт çеç сиккелеççĕ унăн».

Тепĕр чухне автор шухăшласа тупнă калуçă сăнарĕ авторăн шухăш-кăмăлне, туйăмне, вăл тĕп сăнар майлă е хирĕç пулнине кăтартса унпа çывăхланма пултарать. Кун пек пулăма текстри тĕслĕхпе çирĕплетмелле. Тĕрĕссипе, автор-калуçă текстра нихăçан та нейтраллă пулма пултараймасть. Вăл яланах пĕр-пĕр сăнар майлă е хирĕç. Хăш-пĕр хайлавсенче, уйрăмах автор сăнарсен сăн-сăпатне сăнланинче, характеристика панинче, вĕсене килĕштерни е килĕштерменни тӳрех сисĕнет. Л. Сачкова Рая сăнарне юратса, çав вăхăтрах хĕрхенсе унăн упăшкине, Алюша, ырламасăр сăнлани

[4] Сачкова Л. Чĕкеçĕм, чĕкеç...: калавсемпе повеçсем. Шупашкар: Чăваш кĕн изд-ви, 1996. 158 с.

курăнать. Вырăн-вырăн автор Райăшăн кулянни тӳрремĕнех куç умне тухать: «Хĕрĕн сехри хăпсах тухрĕ. Хĕскĕч пек алăсен ытамĕнче сывлăшĕ те пӳлĕнсе ларчĕ ун. Куçĕнчен каллех куççуль юхрĕ...

Ĕнтĕ хĕр йăлтах каччă аллинче халь. Тем пек хирĕç тăчĕ пулсан та, Алюш вăйпах хывса илчĕ унăн çиелти шур кĕпине...

Çут тĕнчере кун пек намăс пуррине Рая тĕлĕкре те сĕмленменччĕ. Çамрăк чунри мĕнпур юратуран ырату çеç тăрса юлчĕ... Унччен юратнă Алюшне кун хыççăн юратма мар, курайми пулса çитрĕ вăл. Тухса тарĕччĕ таçта çити куç курми!... Тунсăхлăн ыратса тапрĕ ун чĕри – пĕтрĕ, вĕçленчĕ хĕр ĕмĕрĕ, ĕретлĕн савăнса-кулса та юлаймарĕ, вунçиччĕри пуçпах арăм пулса тăчĕ... Эх, хĕр ĕмĕрĕ!... Хăналăх çеç иккен эс чăнах та».

«Чĕкеçĕм, чĕкеç...» – Людмила Сачкован чи лайăх хайлавĕсенчен пĕринче портретсем те вирлĕ, характерĕсем, ĕçсем, лартнă ыйтусем çивĕч. Унсăр пуçне çыравçă портрет ăсти пулнине те палăртмалла.

Чĕкеç вăл – чăваш халăхĕн сăваплă кайăкĕ. Чĕкеç иленни кил-çурт телейĕ тесе шутланнă. Ун юррипе ача-пăчана каласа мĕрентнĕ. Тем каласассăн та, арçын пурнăç çине пĕр куçпа пăхать, хĕрарăм – хăй куçĕпе. Повесть ячĕ хăех хайлав сĕмне палăртать. Кунта – чăваш халăхĕн чун-чĕри. Кашни ăрăвăн ĕмĕрĕнче хăйĕн кун-çулĕ, илемлĕ тапхăрĕсем, ĕмĕтсем, сăнарсемпе прототипсем. Повеçĕн тытăмĕнче авторăн сăнарĕ, шухăшĕ, ĕмĕчĕ, туйăмĕ, хаклавĕ малта пырать.

«Чĕкеçĕм, чĕкеçре» хускатнă ыйтусем паянхи çамрăксене çывăх. Вулакан умне хальхи вăхăтри çамрăксен туслăхĕпе юратăвĕ тухса тăрать. Мĕн вăл юрату? Мĕнле пулмалла унăн? Çемье юратăвĕ мĕнре е камра?

Хайлав пуçламăшĕнче Рая шкултан вĕренсе тухакан çамрăк хĕр. Тен, çавăнпа-и, ашшĕ-амăшĕ ăна ĕçе ытлашшипех кӳлмен. «Ăшă пӳлĕмри чечек пек-ши? ӳссе çитĕнчĕ Рая», – тет ун çинчен автор.

Килте урай сĕркелет те чашăк-тирĕк çукалать – çавă çеç унăн мĕнпур ĕçĕ те. Вĕренӳре те пит палăрсах каймасть Рая, анчах начаррисен шутĕнче нихăçан та пулман. Ытларах «3» тата «4» паллăсем унăн дневникĕнче. Пурте ăна ăшă куçпа пăхаççĕ: уçă та çăмăл кăмăллăскер, яланах килĕшӳллĕ, капăр тумланаканскер çиçсе-кулса сиккелесе çеç çӳрекенскер, пурин кăмăлне те каять вăл».

Рая телейĕшĕн çине тăрса кĕрешме хал çитереймест, ирĕксĕрлесе, вăрласа качча илсе кайнипе çырлахать, куççуль юхтарнисĕр пуçне нимĕн те тумасть. Вĕренесси çинчен манма тивет хĕрĕн. Вăл фермăра ĕçлет. Хăй юратман, чунĕ туртман ĕç канăçлăх кӳмест, ĕçре те пăтăрмахсем сиксе тухаççĕ. Хунямăшĕ те çиелтен яка чĕлхеллĕскер, чунĕпе – хура. Вăл çамрăксене тату, килĕштерсе пурăнма памасть. Кинĕ çинчен элек сарать, пĕрмаях вăрçтарать. Арăмне ĕçкĕ-çикĕре ыттисем пек савăнсан упăшки ятлать е хĕнесе пĕтерет. Тĕслĕхрен: «Çынсемпе пĕрле Рая ташша тухрĕ. Хаваслă шăв-шавра пĕр хушă пурин çинчен те мансах ташларĕ вăл, упăшки хăй енне сивĕ куçпа пăха-пăха илнине сисмерĕ.

Хăнаран киле таврăнсан, кăна алăка хупрĕ çеç шăмарса пыракан Алюш пĕррех çапса антарчĕ арăмне çĕр çине.

– Алюш! Мĕншĕн?! Ма хĕнетĕн каллех?! – йĕрсе çухăрса ячĕ хĕрарăм.

– Сикнĕшĕн, ют арçынсемпе сикнĕшĕн! Акă сана! Ме! Юхха! Чунна кăларса илетĕп те, çӳçĕнчен йыт вилли пек сĕтĕрсе, чăлана кĕртсе пăрахрĕ.

Çемьере телей курманскер Рая пӳрт ăшши çинчен те, ачисем çинчен те шухăшлама пăрахать. Унта та кунта çӳп-çап выртни те, газ плити хуралса ларни те, ачи-пăчи эрне хушши çăвăнманни те уншăн ним те мар. Çамрăк чухнехи тантăшĕ Галя килсе кĕни – произведени кульминацийĕ. Хĕрарăм, упăшки хĕненине чăтаймасăр хăй çине алă

хурать. Усал ĕç тăвать, çылăха кĕрет. Рая шăпинче нумай чăваш хĕрарăмĕн кун-çулĕ курăнать.

Чип-чипер, ытарма çук хĕрача мĕншĕн лăпăр-лапăр, нĕрсĕр хĕрарăма тухнин сăлтавне витĕмлĕ кăтартнă автор.

Упăшкин сăнарне те витĕмлĕ, куç умне тухса тăмалла калăпланă Л. Сачкова. Алюш – ялти çамрăк, вăл хĕртен пилĕк çула яхăн аслă. Хĕр чухне арăмне юратса «чĕкеçĕм, чĕкеç, ĕмĕр килĕштерсе пурăнăпăр» тет. Пурнăçра апла мар иккен. Япшар чĕлхеллĕ çын та хура чунлă пулма пултарать. Алюш та çапларах çын пулнă.

Кĕвĕç чунлăскер çамрăксен ăсату каçĕнче выляса чуп тунăшăн çапăçу пуçлать. Чурăс кăмăллă, усал, хăй çинчен анчах шутлакан çын. Ирĕксĕрлесе хĕре арăм тăвать. Сăлтавсăрах ӳпкелешет, кӳлешет. Таса чунлă арăмне кĕвĕçет. Вăл ăна хĕр, арăм, ачисен амăшĕ вырăнне хурса хисеплеме те пĕлмест. Илем туйăмĕ çук арçын хăйпе юнашар хитре хĕрарăм пурăннине те асăрхамасть. Çакă вĕсене трагеди патне илсе çитерет те.

Усал çын – чирлĕ çын. Ун чунĕ яланах йӳçсе çӳрет, таврари илемпе ырлăха асăрхамасть. Алюшăн çырла пек арăмĕ «катемпи» пек хăрхăма тухать. Рая хăйшĕн кам пулнине упăшки арăмĕ вилсен çеç туять. Унăн чунĕ тертленет, асапланать. Вăл тепĕр хут авланасси пирки илтесшĕн те мар. Хăй мĕн тери пысăк йăнăш тунине туйса илет.

«Арăмне йăтса илсе вырăн çине хучĕ те фельдшер патне тухса чупрĕ. Хăй ура айĕнче çĕр пуррине те, пуç тăрринче тӳпе пуррине те туймарĕ – мĕн çухатнине тинех ăнланса илчĕ...

Çавăнтанах тăна кĕреймесĕр пурăнать Алюш: ĕçре те канăç çук, килте те кичем, тунсăх, асĕнче вĕçĕмех вилнĕ арăмĕ тăрать, куçа хупсан пушшех ачаш та чипер, йăл кулса кăчăк туртать хăй патне, чĕнет, илĕртет. Каçсерен минтерне ыталаса сассăр йĕрет упăшка...» .

«Чавса çывăх та çыртма çук», – тенĕ ваттисем. Темиçе ĕмĕр чăваш кун-çулĕнче палăракан проблема – вилĕм. Ку хайлаври геройăн

пурнăçĕ те синкерлĕ вĕçленет. Йывăр пурнăç, пĕр-пĕрне ăнланманни, хисеплеменни, шута хуманни, кӳрентерни тата хăш-пĕр çынсем хăйсен çынлăхне çухатни инкек патне илсе çитерме пултарать.

«Чĕлхи çирĕп, вăл – хăйне алăра çирĕп тытса пырса çыракан прозаик. «Кайран юсăп-ха», – тесе чĕлхе, стиль шайрăкĕсене пăрахса хăвармасть. Кашни сăмаха герой чĕлхипе килĕштерсе çырса парать», тет çыравçă çинчен Г. Федоров критик[5].

Çут çанталăк вăхăчĕсене контраст мелĕпе сăнласа автор сăнарсен кăмăл-туйăмне те туллинрех уçса пама тăрăшать. Çут çанталăк пулăмĕсене те, геройсене те хăй евĕрлĕ сăнлать çыравçă, сахал сăмахпах нумай япала пирки калама пултарать. Унăн шухăшлав стилĕнче кĕскелĕх тĕпре.

Повеçри ĕçсем çуркунне, «ирхи сывлăм пек илĕртӳллĕ, çав вăхăтрах хăвăрт та сисĕнмесĕр иртекен вăхăтран» пуçланаççĕ.

«Ирхи сывлăм пек илĕртӳллĕ, илемлĕ, чи хаваслă, капăр, пуян, пуç çавăрмалла асамлă, çав вăхăтрах хăвăрт та сисĕнмесĕр иртекен вăхăт. Чун хĕпĕртенĕ, ӳт кĕнĕ кунсем. Пуласлăх вара ирхи кăвак тĕтрелĕх витĕр хĕвел хăпарнă пек туйăнать.

Хăçан та пулин кĕркунне çитесси халь асра та çук-ха...».

Людмила Сачкова каланă тăрăх, вăл символла герой сăнарлама шутламан. Пурнăçри лару-тăрун пĕр пайне тишкерсе хаклана.

Сăмах ăсти хайлавĕсене пуçлама та, вĕçлеме те, тытăмне йĕркелеме те, сăнарăн хăйĕн чĕлхине тупма, характерсене детальсемпе пуянлатма та пĕлет. Малтанах ытарлăн систерсе хăварасси те пур унăн. Туй кунĕнче пилленĕ чухне хунямăш аллинчи тăвар тăкăнса кайни те, «Микка» повеçре йĕкĕлтесе каланисем те питĕ вырăнлă. Кулăш, тарăху, савăнăç – тĕрлĕ йышши стиль палăрса пырать.

[5] Федоров Г. И. Сăнарлă сăмах шыравĕ. Шупашкар : Чăваш кĕнĕ изд-ви, 1996. 224 с.

Сачкова кĕнекисене вуланă май, паллана çынсен сăнарĕсем куç умне тухса пыраççĕ. Çакна та хăйне евĕрлĕх темелле.

Çыравçă сапăрлăх ыйтăвĕсене çутатакан хайлавсемпе тыткăнлать. Унăн кашни калавĕнче тенĕ пекех вĕрентсе калани сисĕнет. Сапăрлăх ыйтăвĕсене çутатнипе пĕрлех унăн хайлавĕсем тарăн психологизмлă.

Писатель сăнарĕсене «пиçсе çитнĕ» самантра курса ӳкерсе илнĕ пек туйăнать. «Оля-Улькка» калавĕнче те паллана лару-тăрусем нумай: тĕлĕнмелле хитре хĕрача, ăслăскер, шкултан ылтăн медальпе вĕренсе тухнăскер, кайран ăнсăртран ухмах Улькка пулса юлать. Сăнĕ те, ăсĕ те пĕтет хĕрĕн, хăрушă мĕлке пулса юлать.

«Хĕлĕхĕ татăлнă кĕсле пек, ĕмĕрĕ вăрăм, юрри кĕске пулчĕ унăн». Мĕнле сăлтавпа? Ăнсăртран çут çанталăк инкекĕпе шар курни вăл – илемлĕ хайлавсенчи ĕçсене сăлтавлани пулмасть. Авторăн ун пек тума юрамасть. Ку вăл искусство меслечĕ мар, фотографи меслечĕ. Сачкован, тен, кĕске тĕрленчĕк мар, шухăша тарăнлатса кайса, трагеди туппине тупса çырнă пысăкрах хайлав çырмалла пулнă.

«Çаврăм» калаври Аля – ĕçлеме юратман хĕр. Вăл ĕмĕтленсе-ĕмĕтленсе пурăнать те шуçлак пăр çине персе анать.

Хайлавсенчен нумайăшĕ синкерлĕ вĕçленет. Пурнăç парнелеме, ăна илемлетме тивĕçлĕ юрату вилĕм патне илсе пырать. XX ĕмĕр вĕçĕнчи прозăн сăнарлăхĕ пачах урăхла, пурнăç хавасĕ сӳнсе пыни, чыссăрлăх сăнланать. Тин çуралнă ачасене çăла пăрахаççĕ. «Чун» хайлавра тĕл пулатпăр çак пулăмпа. Пĕчĕк Арçукăн пĕчĕк ĕмĕчĕ пирки пĕлтерет çыравçă. «Чĕре сури» балладăра хăрушă ĕç-пуç сăнласа парать. «Выç хырăм хирти шăрчăк пек чăрлатать» тесе пуçлать сăмахне çыравçă. Ыйткалама тухнă ачана кĕреçе сухаллă хуçапа юлташĕ хăваласа çитеççĕ, хăйсемпе пĕрле лартса каяççĕ. Тĕлĕкре те тĕлленмен апата çитереççĕ – пĕремĕк, сушкă, пӳремеч, чăх тукмакки... Сыпкăм-сыпкăм сыптарса ӳсĕртсе яраççĕ. Ку хăрушă ĕç умĕ çеç, ачана

арман айне пăрахас ĕмĕт тытать ват хуçа... Ĕç-пуç кунпах вĕçленместха, урăх енпе те ахрăмланать. Хĕл варринче, такăр çуна çулĕ çинче хуçапа арăмĕ ача тупаççĕ, пĕрле илсе каяççĕ.

Хитре мăшăрăн хитре юратăвĕ те «Ĕмĕтпе Ĕмĕтсĕрлĕх» калавра шăпа аллинче вăхăтсăр татăлать. Хайлаври ĕç-пулăмсем вилĕмпе вĕçленеççĕ. «Ĕмĕтпе Ĕмĕтсĕрлĕх» новеллăри геройсен пурнăçĕ синкерлĕ вĕçленет. Çут ĕмĕтпе пурăнакан, телейлĕ пуласлăха шанса тăракан Таньăпа Сашăна, çĕнĕ пурнăç пуçлас текенскерсене, вăхăтсăр пĕр шăтăка юнашар пытараççĕ. «Ылхан кăна виттĕр виле япали енне алă тăсма ĕмĕтсĕрлĕх çитернĕ çынна! Виле япали виле турттăр, вут япали вут турттăр», – текен сăмахсемпеле хайлава вĕçлесе пурнăç çине урăхларах куçсемпе пăхма хистет автор. Эпир пурте шухăшĕмĕтсемпе пурăнатпăр, шухăшласа хуни пурнăçланасса кĕтетпĕр. Анчах та тепĕр чухне эпир шухăшласа хунă пек пулаймасть, пурнăç саккунне улăштарма май çукрах. Хайлавăн проблемисем анлă. Хальхи вăхăтри тĕп ыйтусем çинче чарăнса тăни куç кĕретех. Ку хайлавра ĕçкĕ палăрăмлă вырăн йышăнать. «Ĕçкĕ айăплă мар, ĕçекен айăплă», – тенĕ халăхра. Таксист ăна усал шĕвек яни вилĕм патне илсе пычĕ, ĕмĕтленнĕ шухăшсене пурнăçлама параймарĕ...

Çĕнĕ шыравсем хушшинче Людмила Сачкова опычĕ ăнăçлă темелле. Хăйне канăçсăрлантаракан шухăш-кăмăла тĕрлĕ енчен, тĕрлĕ сыпăксенче уçса пама тăрăшать вăл. Çав вăхăтрах ыттисем кăнттам алăсемпе тытасран хăй тĕнчине хŷтĕлесе те хăварма пултарать. Сăнарлă шухăшлав тĕпре уншăн. Сăвăсен структури классикăллă формăсен чиккинче.

Произведенисенче авторăн хăйĕн те ыйтусене хурав пама мехел пур. Калас текен шухăшсене тарăнрах уçса пама Сачковăна анлăрах текст кирлĕ пек туйăнать, тен, пысăкрах формăсем те.

Людмила Сачкова халăх, çĕр-шыв тата общество умне тухнă йывăрлăхсемпе инкек-синкексене, чăрмавсемпе кăмăл-сипет

«чирĕсене» пурне те анлăн çĕклесе вулакан патне çитерме тăрăшать. Саманапа, вăхăтпа тан утать вăл, пĕтĕм халăхшăн тата кашни уйрăм çыншăн пĕлтерĕшлĕ те çывăх ыйтусене хускатать.

Людмила Сачкова халăх сăмахлăхĕпе пĕлсе усă курать, йăли-йĕркине тĕплĕн çырса кăтартать. Туйăмлă психологиллĕ шухăшлавсене тăсса каймасть. Лирикăллă япала çырнă чухне шалти туйăмсене кăтартас тĕллевпе нумай автор хайлава тăсса-тăсса пырать те, вулакан вара унран сивĕнет. Сачкова хайлавăн эпикăлла анлăшне, ĕçсен сюжет аталанăвне лирикăлла çаврăмсемпе сыпăнтарса пырать. Çакна авторăн пысăк ăсталăхĕ, хăйне евĕрлĕхĕ тесе палăртмалла.

Çакна вĕрентеççĕ пире Людмила Николаевна Сачкова хайлавĕсем.

Пурнăç парнелеме, ăна илемлетме тивĕçлĕ юрату вилĕм патне илсе пырать. («Чун», «Читлĕхри юрă»). Пĕчĕк Арçукăн йывăр шăпи (тутă пуласси – («Чĕре сури»), çамрăк мăшăрăн ăмсанмалла юратăвĕ те («Ĕмĕтпе Ĕмĕтсĕрлĕх») шăпа аллинче вăхăтсăр татăлать. Оля-Улькка пурнăçĕ те трагедиллĕ хывăнать. Пурнăç юхăмĕпе вăй хумасăр ишсе пыракан Альăна («Çаврăм») та малашлăхра савăнăç кĕтмест. Трагеди калăпăшне уçса пама пĕлет автор. Тарăнăшĕ вара яланах уççăнах пĕтеймест. Кунта шухăшлав стилĕн кĕскелĕхĕ пахалăхран çитменлĕхе куçса кайма тăрать, пĕр япалан икĕ енĕ темелле. Мĕншĕн? Мĕнле майпа? текен ыйтусене туллинех хурав илес килет.

Çыравçă сăнарсен шалти тĕнчипе хĕрӳ туйăмне, чун ыратăвне, сисĕм пуянлăхне ĕненмелле те витĕмлĕн сăнарлать.

Л. Сачкова калавсенче çемье ыйтăвне çивĕччĕн кăтартать. Пурнăç тата унăн йĕрки çине мĕнле куçпа пăхни, ун çинчен мĕн шухăшланипе çыхăнса тăрать. Хальхи саманара çынсем пĕр-пĕринчен уйрăлса, ютшăнса пыни тĕп шухăш пулса тăрать.

Калавсенче тĕнче пăсăлса пынине сăнлакан проблема хайлавсен пуçламăшĕнчен вĕçне çитиех лайăх курăнать.

Çĕнĕлле йĕркеленекен ял пурнăçĕ, сăн-сăпачĕ илемлĕ литература хайлавĕнче ӳкерĕннине тăтăшах курма пулать унăн калавповĕçпе паллашсан. Ял сăн-сăпачĕпе пĕрлех унти çынсен кăмăлтуйăмĕ, тĕнче курăмĕ улшăнса пыни сисĕнет. Паянхи ял çынни ирĕксерлесе çĕнетнĕ пурнăç çине пачах кĕтмен çĕнĕ кăмăл-туйăмпа пăхма тытăнни те курăнать. Ĕлĕк тĕслĕх вырăнĕнче пулнă кăмăлтуйăм, этемлĕх ыйтăвĕсем, çынпа çын, кӳршĕ-аршă, хутшăнăвĕсем хăйсене сăнасах тăма, май пулнă таран авалтан килекен йĕркесене упраса хăварма хистеççĕ. Çавăнпа та Людмила Сачковăна та ял теми кăсăклантарнинчен тĕлĕнмелли нимĕн те çук. Çыравçă пултарулăхĕнче паянхи чăваш ялĕн шăпи мала тухни куç кĕрет. Пăшăрхантармаллипех пăшăрхантарать сăмах ăстине хăй ӳссе çын пулнă çĕрĕн-шывăн хальхипе малашнехи кун-çулĕ.

Людмила Сачкова кашни сăнара детальсемпе илемлетме пĕлет. Повеçĕсенче сăнланă чылай ӳкерчĕк, диалог произведенири ĕçсен малаллахи аталанăвĕпе çыхăннă.

Тен, Людмила Николаевнăна пурнăç çулĕнче шкулта ĕçлеме тивнĕрен, ачасене тăван чĕлхене хисеплеме тата юратма чун парса тăрăшнăран хайлавĕсем те шкул пурнăçĕпе, учитель ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннисем чылай. Вĕсенчен «Маму» хайлава палăртас килет. Çамрăк вĕрентекен – Ираида Ивановна хăйĕн ĕçне чунтан парăнса ĕçлекенскер, пысăк чĕреллĕ çын. Амăш хӳттисĕр тăрса юлнă Муслимшăн чунĕ еплерех ыратать, тĕнче илтмелле кăшкăрса ярас килет унăн. Анчах та вăл – вĕрентекен, унăн пăтăрмаха пĕтерме пĕлмелле, ачана лăплантарма та пултармалла. Хайлав ăнăçлă пулса тухнă авторăн, чун ыратăвне, ачапа вĕрентекен пăшăрханăвне туллин çутатса пама пултарнă вăл.

«Микка» повеҫре автор ялта пурӑнакан пӗр айвантарах йӗкӗт ҫинчен самаях йӗкӗлтевлӗн каласа парать. Микка – вӑтӑр ҫула ҫитнӗ лутрарах, пысӑк кӑвак куҫлӑ арҫын. Ку произведенире пире автор героя ӗҫлеме юратман, пӗлмен ҫын пек кӑтартса парать. Чӑнах та, вӑл тӗрлӗ ӗҫ пуҫласа пӑхать, анчах пӗрне те вӗҫне ҫитереймест. Микка философилле шухӑшсемпе пурӑнать. «Пурнӑҫра хырӑмшӑн кӑна пурӑнмалла мар, анне. Кавлеме качака та пӗлет. Шухӑшлас пулать!» – тет [29, 76]. Герой темӗн те пӗлет пулин те, пурӑҫра вӗсене усӑ курма чухлаймасть. Унӑн дельтаплан тӑвас ӗмӗт ҫуралать. Дельтапланне, инженер пулӑшнипе, туса пӗтерет, анчах та: «Тинех Микулайӗн ӗмӗтленнӗ ӗмӗчӗ ҫитсе пырать! Ял халӑхӗ мӗнле тӗлӗнет унран! «Микка паттӑра тухрӗ! Микка – паттӑр!..» Ҫавнашкал туйӑмсемпе хӑпартланса ҫӗрелле вӗҫӗм пӑхса айкашнипе Миккуль дельтапланне тытса пырасси ҫинчен мансах кайрӗ. Хӑй те хӑй мар... Савӑнӑҫ чикки виҫерен тухса кайрӗ пулас, Миккуль икӗ аллине ҫӳлелле ҫӗклесе урра! кӑшкӑрса ячӗ. Чул пек персе анчӗ вӗҫевҫӗ ҫӗр ҫине».

Ӗмӗтленсе пурӑнать-пурӑнать те, юлашкинчен инвалид коляски ҫинче ларса юлать. Ку хайлавра ашшӗпе-амӑшӗн ҫитменлӗхсем те курӑнаҫҫӗ. Вӗсем Миккана пӗчӗкрен ӗҫе хӑнӑхтарман. «Хӑвана ҫамрӑкла аваҫҫӗ» текен ваттисен сӑмахне шута илмен.

Инвалид коляски ҫине ларсан та ӗмӗтленме пӑрахмасть Микка. Горбачев доклад тунинчен: «Икӗ пинмӗш ҫул тӗлне ҫӗр-шыври кашни ҫын валли хваттер е уйрӑм ҫурт пулать!..» – тесен «Мана, инвалид тесе, хваттер маларах та парӗҫ-ха», – тесе ӗмӗтленет.

Мӗнре-ха Л. Сачкован «Чӗкеҫӗм, чӗкеҫ...» кӗнекене кӗнӗ хайлавсен пахалӑхӗ? Паллах, ку писатель хӑй ӗҫӗсемпе вулакансене тивӗҫтермеллипех тивӗҫтерни, вӑл хуть те хӑш вӑхӑтри саманан чӑнлӑхне ҫырса пани, тӗрлӗ саманари пурнӑҫ тӗрӗслӗхне вулакансем патне илсе ҫитерни, ҫав вӑхӑтри ҫивӗч ыйтусене хускатни. Мӗнле ыйтусем канӑҫ памаҫҫӗ-ха автора? Ку ӗнтӗ этем эрех-сӑра текен

хăрушă шĕвекĕн тыткăнне лексе хăйĕн чыс-хисепне, этемлĕх сăн-сăпатне куллен-кун çухатса пыни те, пулас ăрăва тĕрĕс çул çине тăратасси, çирĕп воспитани парасси те çынлăхпа, чун-кăмăл тасалăхĕпе çыхăннă ыйтусем те, кăмăл-сипет тасалăхĕпе воспитани ыйтăвĕсем те.

Л. Сачкова хайлавĕсен тĕп уйрăмлăхĕ – хайлавсене вĕçлеменни. Автор сюжета çакăн пек йĕркелесе вулакана тарăн шухăша путарать, кашнин хăйĕн пурнăçĕнче пулса иртнĕ ĕç-пуçсен пĕтĕмлетĕвĕ патне илсе пырать.

2.2. «Ытарайми куçсем» кĕнекене кĕнĕ прозăлла сăвăсемпе калавсен, очерксен туртăмĕсем

«Ытарайми куçсем» – Людмила Сачкован иккĕмĕш кĕнеки. Кунта авторăн юлашки çулсенче çырнă çĕнĕ произведенийĕсем кĕнĕ. «Ытарайми куçсем», «Хĕреслĕ çул» прозăлла сăвăсенче, «Пыра ларнă çăкăр» калавра, «Шурăмпуçпе» балладăра тата ытти хайлавĕсенче писательница паянхи çынсен пурнăçне сăнласа кăтартать, лирикăлла геройăн шалти тĕнчипе хĕрӳ туйăмне, чун ыратăвне, сисĕм пуянлăхне ĕненмелле те витĕмлĕн сăнарлать.

«Проза «тикĕс» пырать Сачкован, çав вăхăтрах вăл «илĕртмĕш» умĕнче тытăнса тăраймасть пек, пĕр çаврăм «сăвăласа» та илет. Ятарласа тăрăшни мар пуль çакă. Синтаксис шайĕнче анчах та мар çак туртăм, шалтан тухакан ăнтăлу, пулăмран пысăк пĕтĕмлетӳсем тума хистекенни, тĕрĕсрех каласан, пурнăçри самантлăхсене ĕмĕрлĕх куçĕпе виçме туртăнни тесе калас килет. Çавăнпах пулĕ Сачкован илемлĕ прозăллă сăвăсем çуралаççĕ. Новелла е баллада жанрĕсене килĕштернин пĕр сăлтавĕ те çакăнта пулĕ».

«Эпĕ нихăçан та поэт пулман, пулаймастăп та, манăн сăвă çырма талант çук, кĕнекери хайлавсем сăвăлла прозăсем, прозăпа çырнă,

кĕвĕленекен сăвăсем» тесе пĕлтерчĕ Людмила Сачкова прозăлла сăвăсем пирки.

XX ĕмĕр вĕçĕнче чăваш литературинче прозăлла сăвă аталаннине палăртмалла. Уйрăмах, çырас çул çине тин кăна тăнă çамрăксем прозăлла сăвă кăмăлланине асăрхатăн. Мĕнпе çыхăннă-ши ку пулăм? Чи малтанах, саманапа тесе калас килет. Икĕ ĕмĕр чикки ытла арпашуллă пулчĕ. Поэзипе прозăна килĕштерес тени – çураçулăх тупас тени те. Ку жанрпа ĕçлекенсем хушшинче хĕрарăмсем ытларах пулнин тупсăмĕ çакăнта мар-ши?

Людмила Сачкова пĕлтернĕ тăрăх, повеçсенчи сăнарсем пурте унăн чунĕнче. «Ăçтан пуçтарăннă вĕсем? Уйрăмшарăн калама çук. Ачалăхран килнисем – асанне чĕлхинчен. Эпĕ яланах халăх хушшинче, халăхран пухатăп тата классиксен хайлавĕсене вуланă чух питĕ тимлетĕп. Мĕн çырни пĕтĕмпе тенĕ пекех хамăн тăван ялăн çыннисем, вĕсен пурнăçĕ, вĕсен ăс-хакăлĕ, хавалĕ. Пирĕн Çĕнĕ Ахпӳрт ялĕ вăл питĕ хастар ял. Пысăк та куштан ял. Мана тахçан И. М. Матросов каланăччĕ «Сирĕн ялти кашни çын çинчен уйрăм кĕнеке çырма пулать» тесе. Ку, чăнах та, çапла. Эпĕ çĕнĕ калав çырмассерен ял çыннисем кĕтсе тăраççĕ. Ку кам çынни-ха, тишкерме пуçлаççĕ. Пулнă-пулманнине те хăйсем çине илеççĕ.»

«Чикĕ старик ĕмĕчĕ» калавĕ малтан «Ялавра» пичетленнĕ. Кунта автор ахаль çынна вăл пĕлмен, туйса курман асаппа хурлăха хире-хирĕç тăратать. Тепĕр тесен, мĕншĕн шеллемелле-ха унăн теприсене чĕререн шеллеме пултарайман çынсене? Теприн трагедине ăспа анчах ăнланма çук пулĕ çав. Паллах, Савватий Ивановича шеллесе ăна хирĕç утăм тумалла пулнине пĕлтермест ĕнтĕ ку. Анчах та çынна: «Кирлĕ мар мана сан юратăву, телейсĕрскер», – тесе çапса хуçма юранине те пĕлтермест. «Пĕчĕк çыннăн чĕри пысăк» пулĕ те, анчах та çын тени çиелти илемлĕхе куç хывать чи малтан. Çиелти курăмлăх пулмасан чун сисĕмлĕхĕ кирлех мар пуль çав ăна.

Çиелти тивлетлĕх – виçĕ пӳлĕмлĕ хваттер, унти хăтлăх пĕр самантрах арканать. Сисĕмлĕ вулакана ку калав пурнăç мĕнле черчен, шăпа епле хаяр та вылянчăк пулма пултарни пирки шухăша ярать. Кам пĕлет, тен, ун вылявĕ хăçан та пулин сана е санăн çывăх çыннусене пырса çапсан...

Эппин, асăрхануллăрах пулмалла этемĕн. Хăйшĕн анчах мар, тепринчĕн те яваплăх туймалла.

«Ытарайми куçсем» кĕнекери калавсенчи геройсен тĕрлĕ шăпа. Кама йывăрлăхсене çĕнтерсе çутă ĕмĕтпе малалла пурăнма тăрăшать терĕмĕр, кам çиеле, шыва путнă евĕр, ишсе тухаймасть. Пурнăçра темĕн те пулать, ун çине урăх куçпа пăхма пĕлмелле, шанчăкпа пурăнмалли пирки пĕлтересшĕн вулакансене автор.

Пурнăç темĕн тĕрлĕ мыскара та кăтартма пултарать. Кулăшли те, хурланмалли те пур пурнăçра. Ăнсăртлăха вара сисмен çĕртенех кĕтме пулать. Епле сăпайлă та ырă кăмăллă пулнă ĕлĕкхи чăваш хĕрарăмĕсем!.. Мĕншĕн вĕсем паянхи пурнăçра пачах та урăхла? Кам айăплă кунта? Пурнăç хистет е пачах та урăххи? «Кĕтӳ хăвалана чух» калавра шăпах та çак ыйтусене вулакан умне кăларать Л. Сачкова. Хайлаври сюжет кĕтмен-çĕртен ăнсăртлăх патне çитет. Çак ăнсăртлăх пирки геройсем шутлама та пултараймаççĕ. Чи малтан çакна каламалла, писателĕн воспитани парас туртăмĕ пысăк пулни палăрать. Хветура пит çумасăр çӳренине, виç-тăват саппун çакса тухнине, çуртĕнче те пĕр витрепех пур ĕçе пурнăçланине хăнăхса çитнĕ кӳршисем. Кĕтӳрен тăрса юлнăскер, хăйне саппун аркипе хупласа пырса ĕнине сиккипе хăвалать вăл... Хĕрарăмсем вара унран каçса кайсах кулаççĕ.

– Камран кулатăр? Хăвăртан-и? Ĕлĕк пулсан, ял пухса чĕн пушăпа хĕненĕ ун пеккисене. Иртĕнме паман. Халь – ирĕк, чаракан çук тетĕр-и?. Калавра философилле туртăм вăйлă. Çынлăх, чыс-хисеп, тирпейлĕх, чун тасалăхĕ енне вулакана туртни сисĕнет.

Этемлĕх сăн-сăпатне куллен-кун çухатса пыни, пулас ăрăва тĕрĕс çул çине тăратасси, ĕçченлĕх, гуманизм ыйтăвĕсем канăç памаççĕ прозаика.

«Çăкăр ăшшиллĕ хĕрарăм» очеркпа та паллашма пултарать вулакан. Унта автор «Çăкăр» Уçă Акционерлă Обществăн генеральный директорăн Елена Игнатьевна Бадаевăн кулленхи ĕçĕ-хĕлĕ пирки каласа парать. Кĕнекене те шăпах очерк геройĕ – Е.И. Бадаева кăларма пулăшнă.

Çапла майпа, Л. Сачкован прозăлла сăвă, калав, очерк çырас ăсталăхĕ тĕрлĕ енлĕ пулнине ним иккеленмесĕрех палăртма пултарăпăр. Хайлавсен сюжетне йĕркелес ĕçре те, сăнарсене калăплас тĕлĕшпе те, лартнă ыйтусене татса пама суйланă мелсене те автор тĕрĕс суйласа илет. Çӳлерех пăхса тухнă хайлавсен тĕп геройĕсем ытларах ял çыннисем. Вĕсен сăнарĕсене туллинрех тăвас тĕлĕшпе писатель тĕрлĕ лару-тăрăва, ĕç-пулăма, вăхăтпа талккăша, тĕрлĕ тропсемпе пуплев фигурисене пĕлсе усă курать. Хайлаври япаласен тĕнчи те тĕрлĕ характерсене калăплама май парать.

Çыравçă чĕлхи таса та тирпейлĕ, ырă вăрлăх пек тутлă, тĕшĕллĕ, тарăн пĕлтерĕшлĕ. Унăн чĕлхи-сăнлăхлă чĕлхе. Тĕрлĕ илемлĕх мелĕсемпе, тропсемпе усă курать вăл: эпитет, танлаштару, метафора, инверси. Çав сăнлăхсене тумтир çинчи теттесем евĕр хитришĕн çакса ямасть. Вĕсем хайлавсен шалти содержанийĕпе тачă çыхăнса тăраççĕ, ĕç-пулăма çĕнĕ енчен çутатса пама пулăшаççĕ.

2.3. «Çеçенхирти ир» кĕнекене кĕнĕ хайлавсен сăнарлăхĕ

2012 çулта пичетленсе тухнă «Çеçенхирти ир» – унăн тăваттăмĕш кĕнеки. Унта прозăлла сăвăсемпе калавсем тата халăх театрĕсем валли çырнă пьеса кĕнĕ.

«Эпир çеçенхир тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ, пирĕн чунра ирĕклĕх нумай, эпир уçă сывлăша, хĕвел янкăр çутатса пăхнине юрататпăр, çакă пурнăçăн пĕр пайĕ пулнине туйса тăратпăр. Хамăр енне кайнă чухне чун ирĕкленсе каять» тет Людмила Сачкова çĕнĕ кĕнеке пирки сăмах пуçарнă май.

Халăх юрри-кĕвви, ваттисен сăмахĕсем калавăн сăнарлăхне хăйне евĕр чĕрĕ тĕс кӳрекен çăл куç пулса тăраççĕ. Л. Сачкова ваттисен сăмахĕсемпе пĕлсе усă курать.

«Çырла хушшинчи çĕлен» калавра писатель çын психологине, шалти пурнăçне кăтартса пама ăста. Вăл унăн кăмăл-туйăмĕн енĕсене витĕмлĕн сăнласа пама пултарать. Таньăпа пĕрле вулакан кулянать, пăшăрханать, уншăн хăрать. Писателĕн калавĕнчи герой хăйне тивĕçлĕ кăмăл-туйăмлă, хăйне евĕр хускануллă çын пулса тухнă. Вăрмана çырлана кайнăскер çĕлене асăрхать, хăй çӳллĕшскер Таньăна хăратать. Сăхасран шикленнĕскерĕн çырла çиес килми пулать. Асламăшĕ юнашар пулни вăй-хăват кӳрет хĕр ачана, пĕтĕмпех пĕлекенскер мăнукне лăплантарма пултарать.

«Вăрман тени çапла вăл, ăçта – çырла, унта çĕлен.» – тесе асламăшĕ мăнукне тавралăх саккунĕпе паллаштарать.

Хайлавра усă курнă евĕрлев сăмахĕсем япалана чĕррĕн сăнласа пама пулăшаççĕ.

– Е-е! А-е! А-е! Ай! – хăй хăранине ĕнентерӳллĕн пĕлтерет тĕп сăнар.

Çыравçă хайлавĕнче çут çанталăка сăнлакан самантсем чылай, вĕсем ытларах çын психологине, унăн тавра курăмĕпе ăс-тăнне сăнланă чухне тĕл пулаççĕ.

Хайлавра пулса иртекен ĕç-пуç герой хăй чунĕпе туйса илет, хăй ăсĕпе ăнкарать. Акă «Кашкăр ами тата кăкăр ачи амăшĕ» калава илер. Ку хайлавра автор тĕрлĕ актуаллă проблемăсене хускатать: ачалăх, амăшлăх. Л. Сачкова çын шăпи çутçанталăк ытамĕнчи ĕç-пуç

витĕр кăларса аннесен психологине лайăх уçса парать. Калав вулакансене тарăн шухăша ярать. Аннесем хăйсен ачисемшĕн нимĕн те шеллемеççĕ, пурнăç та шел мар вĕсемшĕн...

Л. Сачкова калавĕсем çăмăллăн вуланаççĕ. Автор хайлавĕсене ансат чĕлхепе çырнă. Хайлавĕсенче хальхи пурнăçра кăсăклантаракан ыйтусене хускатма тăрăшнă.

«Чĕкеçĕм, чĕкеç...», «Ытарайми куçсем», «Шăпăрлан», «Çеçенхирти ир» кĕнекесене кĕнĕ мĕнпур хайлав пулса çитнĕ.

Кĕнекесенчи калавсемпе повеçсенче паянхи пурнăç, паянхи çынсем уççăнах курăнса тăраççĕ. Пур хайлавăн прототипĕсем пур, – тет хăйĕн геройĕсем çинчен Л. Сачкова. Хăшĕсем халĕ те пурăнаççĕ, хăшĕсем – вилнĕ. Хайлавсен тĕп шăнăрĕсене пурнăçран илнĕ. Сăнар тăвас ăсталăх пысăк Сачкован. Ял çыннисем, ака-суха ĕçĕпе чыслă пурăнакан яш-кĕрĕмпе хĕр-упраç вулаканшăн çывăх пулнине те палăртмалла. Çавăн пекех шкул пурнăçĕпе çыхăннă калавсем чылай унăн.

Людмила Сачкова аслă ăрури писательсен пуян опытне тимлĕ тишкернине, çавăнпа пĕрлех хăйĕн пултарулăхĕнче çĕнĕ мелсемпе ăслайсем шырани те куç кĕрет пулнине палăртса хăвармалла. Юлашки çулсенче çырнă калавсенче темăсен анлăшĕ сарăлса пыни, унччен пачах хускатман е тивĕçлипе çутатса паман çĕнĕ проблемăсене хускатни уççăн курăнать, ку ĕнтĕ Людмила Сачкова пултарулăхĕ малалла аталанние пĕлтерет.

Çĕнĕ шыравсем хушшинче Людмила Сачкова опычĕ ăнăçлă темелле. Хăйне канăçсăрлантаракан шухăш-кăмăла тĕрлĕ енчен, тĕрлĕ сыпăксенче уçса пама тăрăшать вăл. Çав вăхăтрах ыттисем кăнттам алăсемпе тытасран хăй тĕнчине хŭтĕлесе те хăварма пултарать. Сăнарлă шухăшлав тĕпре уншăн. Сăвăсен структури классикăллă формăсен чиккинче.

Произведенисенче авторăн хăйĕн те ыйтусене хурав пама мехел пур. Калас текен шухăшсене тарăнрах уçса пама Сачкована анлăрах текст кирлĕ пек туйăнать, тен, пысăкрах формăсем те.

Людмила Сачкова халăх, çĕр-шыв тата общество умне тухнă йывăрлăхсемпе инкек-синкексене, чăрмавсемпе кăмăл-сипет «чирĕсене» пурне те анлăн çĕклесе вулакан патне çитерме тăрăшать. Саманапа, вăхăтпа тан утать вăл, пĕтĕм халăхшăн тата кашни уйрăм çыншăн пĕлтерĕшлĕ те çывăх ыйтусене хускатать.

Сăмах ăстин чĕлхи çепĕç те чăн чăвашла, пуян та техĕмлĕ. Хайлавĕсем хăйсем тĕллĕн, çăмăллăн вуланаççĕ, вĕçленӳллĕн тĕвĕленеççĕ. Калавсен тытăмĕнче авторăн сăнарĕ, шухăшĕ, ĕмĕчĕпе туйăмĕ, хаклавĕ малта пырать.

III ПАЙ. ÇЫРАВÇĂ ДРАМАТУРГИЙĔНЧИ ЖАНРПА СТИЛЬ ПАЛĂРĂМĔСЕМ

3.1. Ача-пăча валли çырнă пьесăсен сăнарлăх паллисем

Эрни-эрнипе çумăр лӳшкенĕ хыççăн ăмăр пĕлĕтсене сирсе хĕвел тухать. Тата хĕрӳллĕрех сапалать вăл пайăркисене. Этем пурнăçĕ те çавнашкал. Йывăр тапхăр телейлĕ кунсемпе ылмашăнать. Аслатиллĕ ăшă çумăр хыççăн тĕнче уççăн сывланине кам курман пулĕ$ Çавнашкал ăшă та сиплĕ пĕрхĕт çут çанталăкра çеç мар, этем пурнăçĕнче те çуса иртет иккен. Тепĕр чух ху та сисместĕн – тĕнче тĕксĕм курăнать, кăмăлу хытнă, ĕçӳ ӳрĕк-сурăк пырать. Акă каçхине эсĕ театра каятăн. Тĕттĕмленнĕ залра шăплăхра сан ума тĕлĕнмелле çутă сăнар – хăвна чи çывăх сăнар тухать. Унăн чĕререн каланă сăмахĕ саншăн темшĕн аслати пек хăватлăн янраса каять. Тинех санăн кулленхи вак-тĕвек ĕçсенче çĕнĕ туйăм çуралать... Ку вăл – çын хăйĕн инкекне çĕнтернĕрен, пурнăç тупсăмне курнăран!

Çапла, театр çын ăшĕнче тăвăл кăларать, ун чĕрине кулленхи çӳп-çапран, тусанран çуса тасатать. Çак çиçĕмлĕ-аслатиллĕ хăвата ăсталаканĕсем пулса тăраççĕ те ĕнтĕ чăн-чăн писатель-художниксем. Людмила Сачкова та хальхи литературăри прозаик-драматург пулма пултарнине çирĕплетсе пачĕ.

Людмила Сачкова Раççей искусствисен академийĕнче Михаил Шатров тата Михаил Рощин ертсе пынă драматурги мастерскойĕнче вĕреннĕ. Çак тĕслĕх шăпах та çирĕп йĕркене пăхăнакан хăйне евĕрлĕ кăсăклă та кăткăс рете ахальтен суйласа илменнине те туллинех кăтартса парать. Драма мĕн сĕм авалах сăмах ӳнерĕн чи анлă сарăлнă, илемлĕ литературăн несĕлĕ шутланнă. Мĕншĕн тесен театр сцени çинче вылякан актерсем хăйсен вылявĕпе кирек мĕнле куракана та тыткăнлама, драмăн тĕп ыйтăвĕпе шухăшне чун-чĕри патне çитерме пултарнă, выляв ĕç-пулăмне чĕрĕлĕх кĕртнĕ. Çак пулăм

паянхи кун та хăйĕн пĕлтерĕшне çухатман. Людмила Сачкована та ахальтен илĕртмен çак литература речĕ. Маларах каларăмăр ĕнтĕ, унăн пьесисемпе Чăваш патшалăх пукане театрĕ 1998 çулта «Шăпăрлан», 2000 çулта Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕ «Юрату турри», 2002 çулта «Эсĕ кайрăн та...», 2004 çулта вара «Çухалнă хур кайăк çулĕ» спектакльсем сцена çине кăларнă. 2011 çулта Чăваш патшалăх академи драма театрĕн сцени çинче Людмила Сачкова çырнă «Пĕртен-пĕрескерĕм» пьеси тăрăх лартнă спектакль тухнă.

Л. Сачкова – 2003, 2012 çулхи «Чĕнтĕрлĕ чаршав» конкурссен «Çулталăкри чи лайăх драмтург» номинаци лауреачĕ. Унăн «Шăпăрлан» кĕнеки 2003 çулта Чăваш наци библиотеки ирттернĕ «Çулталăкри чи лайăх сборник» диплома тивĕçнĕ. «Çухалнă хур кайăк çулĕ» пьеси 2004 çулта республикăри наци драматургĕсен конкурсĕнче 2-мĕш вырăн çĕнсе илнĕ.

«Çак пурнăçа никам та ахальтен килмен. Кашни çыннăнах хăйĕн вырăнĕ пур, хăйĕн ĕçне те тивĕçлĕн пурнăçласа пама майне те шырать кашниех. Пĕрин юрлас килет, теприн ташлас ăсталăхĕ пысăк. Манăн вара çырас туртăм пурри лăпкăн пурăнма памасть. Пĕр-пĕр ĕç тума пуçласассăн вăхăт сисмелле», – тесе пĕлтерет çыравçă. «Хăш самантра, мĕнлерех вăхăтра çырас туртăм ытларах палăрать$» – тесе те кăсăклантăм Людмила Сачковаран. «Кашни хайлавра хам курнă, асанне каласа панă пулăмсем пирки çырса пама тăрăшатăп. Тĕрлĕрен пулса иртет, тĕрлĕ енчен пырса кĕрет шухăш. Тӳрех пуçри сăмахсене хут çине çырса хума васкатăп», – сăмахлать Людмила Николаевна.

Мĕнре-ши Сачкова драмисен асамлă вăйĕ? Писателĕн тĕп задачи – халăх пурнăçне тĕрĕс ӳкерсе кăтартасси. Чăн-чăн художник пурнăçа çаплипех ӳкерсе кăтартипе çеç çырлахмасть. Вăл ырăпа усал хушшине хăюллăн кĕрсе ырришĕн çине тăма, усала хирĕç кĕрешме вĕрентет. Пурнăçа тĕрĕс, анчах унччен пĕлнĕ пек çеç мар, çĕнĕ енчен сăнаса кăтартать.

«Чи малтан эпĕ портрет тăватăп, сăнара йĕркелес ăсталăха ытларах аталантарма тăрăшатăп. Кашни пĕчĕк паях çӳпçене чиксе хуратăп. Сăнар чунпала мĕнлине, сăн-сăпачĕ мĕнлерех пулмаллине йĕркелетĕп. Сюжет йĕрне хыватăп, событисене вара арчара шырма пуçлатăп. Хăш пулăм ытларах килĕшӳллĕрех пулĕ-ши тетĕп. Паллах, шухăшлани, фантазипе усă курни пысăк вырăн йышăнать» тет Л. Сачкова интерьюра.

Драма текстĕнче персонажсен пуплевĕ тĕпре тăрать. Апла пулсан, драмăри сюжет аталанăвĕ пĕтĕмпех персонажсенчен, тĕпрен илсен, тĕп сăнарсен калаçу-тыткаларăшĕнчен, вĕсен ĕçĕ-хĕлĕнчен питĕ нумай килет. Çавăнпа та драма хайлавĕн чи паллăрах енĕ вăл – унăн сюжет аталанăвĕ тата персонажсен нумай пуплевлĕхĕ. Персонажсен хăйне евĕрлĕ сăнарĕ монологра, диалогра тата полилогра уçăмлă палăрать. Пуплев драмăри сăнарсене пĕр-пĕринчен уйăрса илмелли чи курăмлă стиль паллисенчен пĕри. Драма текстĕнчи персонажсен пуплевĕ илемлĕ хайлав содержанийĕнчен, унăн хавхинчен, вăл мĕнле проблемăллă пулнинчен тата çав хайлаври сăнар характерĕнчен питех те нумай килет. Çавăнпа та пĕр-пĕр драма текстĕнчи героя пур енлĕ, тулли характеристика парас тесен чи малтан, вĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе пĕрлех пуплев тыткаларăшне пысăк тимлĕх уйăрмалла: кам мĕнле калаçать, мĕнлерех сăмахсемпе усă курать. Мĕнлерех унăн пуплев интонацийĕ, пуплев хăвăртлăхĕ, сасă тонĕ тата ыт. те.

Людмила Сачкова пьесисенчи сăнарсен пуплевĕ, хайлав темине кура, тĕрлĕрен йĕркеленет. Кăмăл-сипет проблемине тĕпе хурса çырнă драма хайлавĕсенчи сăнарсен пуплевĕ ытларах чухне кулленхи йăлари калаçу евĕрлĕ йĕркеленет.

Драма жанрĕ çивĕч конфликтсене юратать, вăйлă характерсене, хĕрӳллĕ туйăмсене кăмăллать. Конфликта çивĕччĕн аталантарас енĕпе асăннă çыравçăн хайлавĕсене пăхса тухăпăр.

Драматург хăйĕн ăш-чикĕнче, шалта пулса иртекен улшăнăва кăтартать, психологилле хĕрӳллĕ конфликт ăсталать. Геройсен чунчĕрине, характерсене паянхи вулаканшăн та интереслĕ туса, ăна пăлхантарса уçса парать.

Тĕрлĕ идейăсем терлĕ идейăна пăхăнса тăраççĕ. Автор ку пьесăра хальхи обществăн тӳнтер енне çиеле кăларать. Шаккать, çыравçă этем чунĕн алăкне, сĕмсĕрлĕхрен тухмаллине систерет. Çакна пурнăçлама кашни этемĕн хăйĕн чунне йĕркене кĕртмелли, тасатмалли пирки аса илтерет. Л. Сачкова паянхи литературăна этемлĕхшĕн кăсăк тематикăпа, анлă содержанипе тата сăрăсемпе ӳкерме юратакан художник. Ăна ытларах çын психологийĕ интереслентерет, хайлавĕсене хăй курнă пек хайлать.

Л. Н. Сачкова пьесисем – сцена ăсталăхĕ тĕлĕшпе йĕркелесе çырнă произведенисем. Содержани енчен те, форми тĕлĕшĕнчен те паха лиризм, философилĕх, çынсен психологине тарăн та уçăмлăн уçса пани курăнса тăрать. Людмила Сачкова чунĕнче яланах çырас туртăм илĕртни, пулăмсене хăйне евĕрлĕ илемлĕн курма май пани пур. Вăл ытларах шкулта драма кружокĕсемпе халăх театрĕсем валли çырать. «Шăпăрлан», «Тирпейсĕр Тимуш», «Сарă хĕвелшĕн тата кăвак тӳпешĕн» хайлавĕсем ачасен паянхи пурнăçĕпе çыхăннă. «Эсĕ кайрăн та...» драма, «Юрату Турри» романтикалла баллада, «Çăтмах шыраса» сатирăллă комеди, «Хур кайăк çулĕпе», «Пĕртен-пĕрескерĕм» пьесăсем – çамрăксен ĕçĕ-хĕлĕпе юратăвĕ çинчен каласа параççĕ.

Театр валли çырнă хайлава тишкермелли майсемпе ăслайспем темиçе те пур. Вуланăçем ăнлантарса пыни- чи ансат меслет. Рольсем тăрăх палăртуллă вулани- кăшт кăткăсрах. Чи кăткăсси, тĕплирежиссерпа вулани, лартса пама хатĕрленни.


Чăваш халăх театрĕн историйĕпе теорине çителĕклĕ тĕпчемен. Вăл питĕ Пуян, нумай енлĕ. Халăх е кил-йыш чӳкĕсем, ĕçки-çики,

ларми-улахĕ, кушарĕпе пуххи, чӳклемипе акатуй, сурхури, кĕпшинкке, çăварни е тата çуллахи калăм-сĕренĕ, вăйă-кулă, кăвайт, юпа-пурте драматурги пулăмĕсем. Чăваш яш-кĕрĕмĕн вăйă картийĕ хăй чăн-чăн кăткăс спектакль.

Чăваш театрĕпе драматургийĕн халăхра тымарĕсем тарăнран пирĕн профессиллĕ театрпа драматурги вăйлă аталаннă.

Пурне те пĕлме тăрăшакан, ăслăлăх тĕнчине ăнтăлакан ача çинчен «Шăпăрлан» пьесăра çырса кăтартать сăмах ăсти. «Пĕртен-пĕр ывăлăм пĕрмаях ыйту çине ыйту паратчĕ, темĕн те пĕлесшĕн çунатчĕ, вăлах хистерĕ пулĕ хайлав шăрçалама» аса илет Людмила Николаевна.

21 ĕмĕр пуçламăшĕнчи шкул программине ачасен ӳсĕмне тата вĕрентӳ тĕллевĕсене юрăхлă тĕрлĕ жанр хайлавĕсене кĕртнĕ. Людмила Сачкован "Шăпăрлан" пьесине 6-мĕш класра вулаççĕ.



Пьесăра ĕç хальхи вăхăтра пулса иртет. Тĕп сăнар – 5-6 çулхи Лявуç. Хайлаври ытти сăнарсем, амăшĕсĕр пуçне, пурте хăйне майлă шухăшлаççĕ.

Пьеса Лявуç ыйхăран вăраннипе пуçланать. Картишĕнче автанпа чăхсене кашни кунах апатлантарать, вĕсемпе сăмахлакаласа та илет. Ытларах Лявуç Сарă чăхпа, Клюккапа туслă. Тен, çавăнпа-и, Лявуçа автан хăйне юратман пек туять. «Картиш хуçи вăл çеç мар, эпĕ те. Чăхсем мана та юратаççĕ. Кĕлетрен тулă илсе сапса паратăп та, пурте ман хыççăн чупаççĕ. Сарă чăх чĕппи – манăн тус. Эпир унпа кунĕпех выляпăр. Автан вара мана çавăншăн çулăхать, тек хыçран хăвалать, пĕр канăç çу-у-ук...»]. Кунта автор ачасене ĕçе явăçтарас туртăмне илемлĕ чĕлхепе çырса парать. Çав вăхăтрах выльăх-чĕрлĕхе, кайăк-кĕшĕке, чĕр чунсене юратмаллине те пĕлтерме манмасть.

Лявуç амăшне хуплу пĕçерме пулăшать, шăпах çак вăхăтра пĕр ыйту канăçсăрлантарса ярать: чăхсем, çăмартасем ăçтан пулнă тата хăшĕ маларах пулса кайнă? Кун пирки Клюккаран та ыйтать, анчах лупас тăрринче, чăх кăтăклатнă майăн, Лявуç сывăрса каять, асамлă тĕлĕк курать. Тĕлĕкре университетра профессорсем чĕпсене мĕнле пулмалли çинчен вĕрентеççĕ, имĕш. Автан патша Лявуçа хăйĕнчен каçару ыйтма хушать, тĕнче автанран пуçланса кайнă тесе ĕнентересшĕн. Лявуç парăнмасть. Çăвăр автансем ачана пусса пăрахаççĕ. Эсремет патне лекет Лявуç. Эсремет Хĕвеле тĕп тума планлать. Вĕсен хушшинче тĕнче мĕнрен пуçланса кайни пирки тавлашу пулса иртет. Кашниех хăйне майлă ăнлантарать. Кăвак шапа Лявуç сывăрнă чух, ăна мерчен шăрçа хыптарса хăйĕн пекех тума хăтланать. Ту хысакĕ хыçĕнче пытанса тăнă Клюкка чупса тухса шăрçана хăвăрт сăхса илсе аякка сурса пăрахать. Икĕ тус, Лявуçпа Клюкка Хĕвелпе Шевлене те çăлаççĕ.

Людмила Сачкова ку хайлавра пĕчĕк ачан, Лявуçăн, шалти тĕнчине, шухăшлавне тĕрĕс кăтартать. Кăшкăруллă предложенисемпе,

сăмахсемпе автор тăтăшах усă курать. Çакă ача амăшне юратнине уçăмлах палăртать. Çемьере, кил-йышра юратупа туслăх, килĕшӳ хуçаланнине систерет. Çавăн пекех Людмила Сачкова евĕрлев сăмахĕсемпе усă курса хайлава пĕр енчен пахалăх сĕмĕ кĕртет, тепĕр енчен ача-пăчан ансат сăмахлăхне пĕлтерет. Вĕсен чĕлхи хăйне евĕрлĕ пуян та кăсăклă.

Автор ачасене ыррине вĕрентсе йăнăш утăмран асăрханма хистет. «Шăпăрлан» пьесине шкул программине те кĕртнĕ. Унта ачасене кирлĕ пек вĕрентӳпе воспитани парасси уçăмлă палăрса тăрать.

Пьесăра пĕр тĕлĕк Лявуç ятлă ачана нумай конфликтран хирĕçтăруран ирĕкленме, ку таранччен килĕшмен япалана кăмăла каякан тума пулăшать.

«Хыпар» хаçатра Надежда Смирнова журналист пьеса пирки çакна палăртнă: «Шăпăрлан» – театрти Юрий Филиппов çамрăк режиссерăн пĕрремĕш ĕçĕсенчен пĕри. Спектакль ыттисенчен уйрăмрах пулса тухнине палăртмалла. Чи малтанах, автор суйласа илнĕ тема питĕ хăйне майлă, ытти юмахсенчи пек мар. Кунта ачасен тавра курăмне ӳстерме, пурнăçа сăнама, тĕпчеме вĕрентекен, хистекен тĕп шухăш витĕр палăрать. Автор ачасене пĕчĕкренех юрату айхашăвĕсемпе тăрантса ӳстерме кирлех мар, ытларах вĕсен пĕлӳ туртăмне вăратма пулăшакан хайлавсем пулччăр тесе шутлать. «Çут тĕнче ăçтан пулса кайнă? Пĕрремĕш çын епле пулнă$ Кам аслăрах – çăмарта е чăх, автан?» Çакăн йышши ыйтусем тухса тăраççĕ спектакль куракан умне».

Пьесăна чăваш халăх фольклорĕн йĕрĕсене тĕпе хурса çырнă. Çакăнта мар-и авторăн тĕллевĕ – çамрăк ăрăва чăваш халăхĕн авалхи йăли-йĕркисемпе паллаштарасси, вĕсене хисеплеме вĕрентесси».

«Тирпейсĕр Тимуш» пьесăра ĕçсем паянхи кун, çут çанталăк заводсемпе фабрика каяшĕсемпе вараланнă вăхăтра, тĕнче экологи катастрофи умĕнче тăнă кунсенче пулса иртеççĕ.

Хайлав ятĕнченех паллă ĕнтĕ, пьесăра тĕп сăнар Тимуш – 9 çулхи кахал ача. Ытти сăнарсем – кушак, курак, тăри, шăна, вĕтĕ çĕлен, Чумапа Свинка – ерекен чирсем.

Çыравçă вĕсене хайлавра ачасене куллен тата пурнăçра епле пулмаллине вĕрентмелли ĕçсемпе, сăмахсемпе сăнарласа кăтартать. Акă, Тăри ирех тăма хистет: «Тăр-р! Тăр-р! Тăратни, çук-и?.

Кушак ирхине тăрсан пит çума «Кушак (чупса пырса Тимуша шăлавар пĕççинчен туртать) Мяу! Мяу!..»

Кушакпа Тăри Тимуша ĕçлеме хăнăхтараççĕ. Тирпейсĕр, таса мар пурăнсан темĕнле чир-чĕр те çакланма пултарасси паллă, унта темĕн чухлĕ микроб. Шăна, Свинка, Чума – ерекен чирсем Тимуша хăйсен серепине çаклатасшăн çунаççĕ. Кушакпа Тăри пĕчĕкскере пулăшаççĕ, çăвăнма хушаççĕ.

Экологи ыйтăвĕ тĕпре çак хайлавра. Çут çанталăка сыхлас енĕпе ачасем мĕн тума пултарассине те тĕплĕн каласа парать. Паллах, сĕнӳсене çыравçă пьесăри геройсем урлă пĕлтерет.

Л. Сачкова ачасене Тимуш пек кахал та тирпейсĕр, чунсăр пулмалла маррине пĕлтерет. Унăн чĕр чун геройсем паянхи пурнăçри лару-тăрăва витерӳллĕ уçса параççĕ.

Автор çак пьесăсенче сăнарсем урлă пурнăçа кăтартса парать: пĕр япалана тепĕр япалапа танлаштарать, чĕрĕ мар япаласене чĕрĕ пек кăтартать, уйрăм сăмахсене куçăмлă пĕлтерĕшпе калать, хăй сăнлакан çынсене, япаласемпе пулăмсене пирĕн куç умне чĕрĕ ӳкерчĕк пек кăларса тăратать.

Людмила Сачкова тăван чĕлхе тирпейлĕхĕпе тасалăхĕшĕн, унăн пуянлăхĕпе хайлавсенче туллинрех усă курма тăрăшнă. Вăл ваттисен сăмахĕсемпе, сăнавсемпе, витĕмлĕ танлаштарусемпе, халăх

сăмахлăхĕпе тăтăшах усă курни авторăн тата хайлаври геройсен чĕлхи-калаçăвне нумай пуянлатать.

Икĕ пайлă, тăватă курăнуллă пьесăри илемлĕх сăнарсен выляв ĕç-хĕлне пăхăнса йĕркеленет. Вылявĕ вара тӳрремĕнех персонажсен пуплевĕпе сыхăннă. Текстри сăнарсен пуплевĕ кăмăл-сипет проблемине тĕпе хурса çырнă драма хайлавĕсенчи сăнарсен пуплевĕ ытларах чухне кулленхи йăлари калаçу евĕрлĕ йĕркеленет. Пьесăра Кушак, Курак, Тăри, Шăна пур, вĕсем сынсем евĕрех калаçаççĕ, тăхăр çулхи кахал ачана тирпейлĕ пулма вĕрентеççĕ. Ку пьесăра конфликт йĕрĕсем нумай йӳплĕ. Кашни сăнарах Тимушпа тӳрĕ конфликта кĕреççĕ. Тĕп сăнар характерне тĕрлĕ лару-тăрура курса хаклама май парать. Ырра вĕрентет хайлав, пьеса вĕçĕнче сăнарсем пурте пĕрле йывăç лартма пикенеççĕ, сывлăш уçăлтăр теççĕ. Хайлава вуласа тухакан кашни ача çут çанталăк çине урăхларах куçсемпе пахма пултарĕ, текех тавралăха сăтăр тумĕ, пулăшма çеç тăрăшĕ. Сюжета ăнăçлă йĕркеленĕ автор. Хайлав кăткăслăхĕ текстри ĕç-пулăмсем мĕнлерех хăвăртлăхпа улшăнса, аталанса, çивĕчленсе пынинчен те нумай килет.

«Сарă хĕвелшĕн тата кăвак тӳпешĕн» фантазиллĕ-приключениллĕ пьесăра пуласлăх пирки сăмах хускатнă. Ĕç хальхи вăхăтра хулара пулса иртет, унтан Африкăна куçать. Урамсенче нумай машина çӳрени, завод трубисенчен хура тĕтĕм йăсăрланни пăшăрхантарать автора. Кунта çут çанталăк тасамарлăхне пула ăшă енчен вĕçсе килсе чĕпĕ кăларнă чух тăрна ами вилет, чĕпписем мутант çуралаççĕ. Мутант чĕпсем питĕ хăрушă иккен. Хулапа ял урамĕсенче субботник ирттермелле, çуртсене, хуралнă пĕлĕтсене кăпăклă шывпа çуса тухма пултараççĕ ачасем. Кунта хайлаври ĕçсемпе залри ачасен хутшăнăвне автор ăнăçлă сыхăнтарнă. Çапла туни ачасене хайлаври ĕç-пуç епле апла килсе тухнине ăнланса, тĕрĕс вырăнлă çул суйласа

илме пулăшать. Пьесăри геройсем Африкăна та çитсе кураççĕ. Унта та çут çанталăка сыхлас тесе тăрăшаççĕ.

Автор çак пьесăсенчи сăнарсем урлă пурнăçа кăтартса парать, пĕр япалапа танлаштарать, чĕрĕ мар япалана чĕрĕ пек кăтартать, уйрăм сăмахсене куçăмлă пĕлтерĕшпе калать, хăй ăнланакан çынсене, япаласемпе пулăмсене пирĕн куç умне чĕрĕ ӳкерчĕк пек кăларса тăратать.

Людмила Сачкова тăван чĕлхе тирпейлĕхĕпе тасалăхĕшĕн, унăн пуянлăхĕпе хайлавĕсенче туллинрех усă курма тăрăшнă. Вăл ваттисен сăмахĕсемпе тăтăшах усă курать. Çак мел хайлаври сăнарсен калаçăвне пуянлатать.

Хайлавсене чăваш халăх фольклорĕн йĕрĕсене тĕпе хурса çырнă. Çакăнта мар-и авторăн тĕллевĕ – çамрăк ăрăва чăваш халăхĕн авалхи йăли-йĕркисемпе паллаштарасси, вĕсене хисеплеме вĕрентесси.

3.2. Çамрăксем валли çырнă драма хайлавĕсен хăйне евĕрлĕхĕ

Сачкова хăйĕн хайлавĕсенче тĕрĕссине тӳррĕн кастарать, калас шухăшĕ çирĕп те ĕненӳллĕ, чĕлхи илемлĕ те черчен.

«Юрату турри» пирки Людмила Николаевнăпа калаçма кăсăклă пулчĕ. Куракана тӳрех тыткăна илет спектакль. Сюжет çаври кăсăк. Çакăн йышши спектакльсем çамрăксемшĕн уйрăмах кирлĕ. Суя юратăва туйма пĕлĕр тесе асăрхаттарнăнах туйăнать. Автор хитрелĕхе курма пĕлни, çынна хисеплени, юратни, персонажсен сăнарĕсене космос шайĕнчи ăнлавпа калăплани, чăн-чăн философ пулни куç умĕнчех. Людмила Николаевнăн сăмахĕсемпе те паллаштармасăр май çук: «Эпĕ хамăн хуть хăш хайлавра та тĕп сюжет йĕрне пурнăçран илетĕп, хам пĕлекен, паллакан çынсен сăнарĕсене тĕпе хуратăп. Ку произведенире – манăн курăм, эп çут тĕнчене епле

илемлĕ сăрăсемпе туйни. Тĕрĕссипе каласан, пурнăçăн чылай саманчĕ мана сăнарлăх урлă, символсем урлă курăнаççĕ. «Юрату Турри» – хăйне евĕрлĕ, чăвашлăх темипе витерĕннĕ аллегориллĕ хайлав – юратусăр куçсемпе çĕр çине пăхсан, çав кӳлленчĕкре тӳпери çăлтăрсене асăрхатăн».

Акă мĕн тума пултарать юрату пирĕнпе, этемпе. Пьесăри тĕп герой – Яш Ивук пирки чăннипех Юрату Турри тейĕн. Сар хĕвел пайăрки пек çутă Саррапа уйăх çинчи кĕвентеллĕ хĕре аса илтерекен Укана çеç мар, ĕçке ярăннă упăшкисенчен ним ыррине кĕтми хĕрарăмсене (Итюка) тата ыттисене те хăйĕн юрату хĕлхемне, чун ăшшине, хитре сăмахĕсене шеллемест. Юратуллă самантсенче Яш Ивук сăвă чĕлхипе каласать: «Хуп-хура куçусем илĕртеççĕ, астараççĕ сĕм тĕттĕм каç пек...», «Сар чечек пек сарă пикене юратас килет çине-çине...» тата ытти те.

Кашни хĕрарăмăнах хăйне юратакан çын пуррине туйса тăрас килни никамшăн та вăрттăнлăх мар. «Юрату Турри» – Яш Ивук вара вĕсене «тăмсай» упăшкисене самантлăха та пулин мантарса телейне юрату авăрне путарать. Тĕрĕс пурнăçра кунашкал морале кам ырлĕ. Чун тасалăхĕ пĕрремĕш вырăнта тăмалла-çке. Яш Ивук вилет. Анчах та Сарра çут тĕнчене ашшĕнчен те хитререх, пултаруллăрах, чаплăрах ывăл парнелет. Апла юрату татăлмасть, унăн ĕмĕрĕ вилĕмсĕр.

Автор чĕлхи пирки те чарăнса тăрас килет. Ытти драматургсемпе танлаштарсан, чăвашла тап-таса, çыпăçуллă, авалхи сăмахсемпе çырнă.

– Кил тĕлне пĕлместĕн! – тесе вăрçать Сарра.

– Мĕнле кил тĕлне пĕлместĕп-ха ĕнтĕ. Хăвна пиллĕкмĕш ача çураттаратăп та! Кашăк тытса ларакан ачусем пурте хăвăн тесе шутлатни?

– Эпĕ сансăр та санпах.

Кашни геройăн ячĕ те сасăсен янăравлăхĕпе, шухăш пĕлтерĕшĕпе палăрать. Сарра – сарă, ылтăн, Ука – уйăх, Элекçей – элекçĕ, Ваççа – кулленхи йăлăхтармăш ят, туйма, хисеплеме, юратма пĕлмен çын ячĕ. Кĕнттӳк – кĕптĕк, айванрах хĕрарăм. Итюк – Ира, селĕп.

Кашни сăнар символ шайĕнче. Чăваш çамрăкĕсен патшалăх театрĕнчи артистсем хăйсен ĕçне – юрату асапланăвне те, вилĕме те чуна илем кӳрекен романтика витĕр кăтартма пултараççĕ. Вĕсем поэзилĕхпе таса туйăмсен ачашлăхне пурнăç кукри-макринче тĕссĕрлетсе çухатмаççĕ.

Спектакле Раççей тава тивĕçлĕ, чăваш халăх художникĕ Праски Витти илемлетнĕ. Вăл пьесăн аллегорилĕхне, символлă пĕлтерĕшне хăйĕн эскизĕсемпе, картинăсемпе пушшех тарăнлатнă. Чăвашăн пурнăç йывăççи те, тĕп геройсен костюмĕсем те спектаклĕн тĕп шухăшне пĕр пĕтĕмĕшле витĕрлеççĕ.

«Эсĕ кайрăн та...» хайлавра паянхи пурнăç ӳкерчĕкĕсем тарăн сăнланнă. Пьесăн темине Çамрăксен театрĕ хăй саккас панă. Пьесăн тĕп шухăшĕ – Чечняна пĕрре кайнă салтак вăрçă хăрушлăхне, тискерлĕхне курса пурнăç хакне, илемне туйма пултарни. Унта вилĕмпе куçа-куçăн тăни пурнăç çине урăхла пăхма, ăна тарăнрах ăнланма хистет. Вăрçă хăрушлăхĕ халăхăн пуçĕнче, чунĕнче шуйхану çуратать. Çын пурнăçран хăраса, ăна мĕнле йĕркелесе ямаллине пĕлмесĕр сехĕрленсе ӳкет, çавăнпа мĕнле те пулин тытăнса тăмалăх пĕр-пĕр йăпану шырать.

«Эсĕ кайрăн та...» пьеса – Чечня вăрçине тӳссе ирттернĕ тапхăр çинчен. Тин çеç пĕрлешнĕ çамрăк мăшăр, телейлĕ пурнăç çинчен ĕмĕтленме çеç пуçланăскер, сасартăках саманан шелсĕр авăрне ӳкет. Çамрăк упăшка Пурис повестка илет те Чечня вăрçине тухса каять. Йывăр çын пулса юлнă çамрăк арăма маттур хуняма «ташлаттарать» кăна – вĕçĕ курăнми ĕç ку килте çамрăк кине Варвари пасара сутă тума

илсе тухать. Унта – укçа вăрçи, «улталаймасăр пуяймастăн»! саккун тата рэкет...

Инкеке лекнĕ çамрăк арăмĕн ачи сусăр çуралать. Чунсăрлăхпа чунлăх хушшинчи кĕрешӳ çивĕчлĕхне артистсем куракансен кăмăлне тыткăна илмелле кăтартма пултарнă. Вăрçа укçашăн иккĕмĕш хут тухса каякан упăшкине Мира чунран татăлса йĕрсе ӳкĕтлет, чĕр куççи çине ӳксе хӳхлесе юлать. Амăшĕн сăмахĕ те ӳкĕте кĕртеймест Пуриса – мĕншĕн тесен унăн ротинчи салтаксем пурте вăрçă хирĕнче выртса юлнă, вĕсен чунĕсем чĕнеççĕ ăна... Салтакăн чĕри епле çуннине хумханмасăр пăхса лараймастăн. Мира вара чирлĕ çуралнă ачишĕн ниçта кайса кĕреймест. Çĕр çинче тăракан Варвари ялан пурлăх пухасшăн, çурт-йĕр çавăрасшăн. Анчах та ывăлĕ тухса кайнăранпа кил-çуртра телей пĕтет, çухалать. Çакна ăнланса илме пурин те чун асапланăвĕ витĕр тухма тивет. Пьеса пурне те хухмантарать, иртнĕ кунсене аса илсе хак пама хистет.

«Çухалнă хур кайăк çулĕ» камитре, ăна ЧР искусствăсен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Вячеслав Оринов лартнă, хальхи чăваш ялĕнчи ĕç-пуçа сăнланă. XXI ĕмĕрти йывăрлăхсене кăтартнă камит тенĕрен, унта кулăшла самантсем пур-ха, анчах шухăша яраканни тата та ытларах. Самана улшăннăçемĕн çын хăй те урăхланать. «Çут çанталăк варалансах пырать. Çын чунĕсем вара тата хăвăртрах нишлĕленеççĕ. Этемлĕх чирлĕ халь. Пурте кĕвĕçеççĕ, улаталаççĕ, пĕр-пĕрне усал сăмахсем каласа вăрçаççĕ. Çын чирĕ майĕпен эпидемие куçать. Чылай çĕрте усал ĕç çуралать. Юратăва сутăнчăклăх таптать», – кулянса пĕлтерет Ваççили ученăй-конструктор. Ăна, Мускавра пурăнаканскере, компьютертан пĕр самантлăха та уйрăлас мар текенскере телеграммăпа Улькка чĕнсе илет. Кавча кайнă, хуçалăхра малтисен ретĕнче шутланакан доярка кĕвĕçет, сăмсине пур çĕре те чикме тăрăшать. Упăшкипе телейсĕр вăл, çавăнпа çамрăк чухне хăй килĕштернĕ Ваççилие самантлăха та пулин курасшăн, çапла

лăпланасшăн. Ăна каччă темиçе çул каялла яраплан туса пĕтерсен хур кайăк çулĕпе вĕçтерме шантарнă пулнă-мĕн, анчах сăмахне тытман.

Ялти çынсенчен чылайăшĕ, калăпăр, Читна кĕтӳç, Праски зоотехник хур кайăк çулĕпе вĕçме, апла-тăк юрату пирки ĕмĕтленеççĕ. Ваççилие вара компьютерсăр пуçне нимĕн те кирлĕ мар, юратнă хĕрĕ улталанăран никама та ĕненесшĕн мар вăл. Амăшĕ Виркка авлантарасшăн пулнине те ĕненесшĕн мар вăл. Аптранă енне Виркапа Праски каварлашса каччăна хăйсем вăрласа кĕресшĕн, ирĕксĕрлесе хĕве хупасшăн. Ĕлĕкхи пек. Праски Ваççилие ачаранпах килĕштерет-çке. Вăл ялта ӳссе çитĕнсе çĕрпе çыхăннăскер юратнă çыннипе пĕрлешсе унран сывă ачасем çуратасшăн. Вăл тата каччăн амăшĕ Ваççилие Андроида çавăрса илесшĕн.

Çапла майпа, пурнăçри вак-тĕвек ăшне путнă, пĕр-пĕрне хисеплеми пулнă çынсен кулленхи чурăслăхне, тĕп геройсен чун пуянлăхне, таса туйăмсен ачашлăхне пĕр самантрах кăтартма пултарать Людмила Сачкова.

Философилле шухăшлав пурри палăрать авторăн. Кашни сăмахăн хăйĕн ытарлă пĕлтерĕшĕ пысăк. Çут çăлтăрсен айĕнче çар уран çӳренĕнех туйăнать. Ăнланса, тĕпчесе çырнă ĕçĕсем чуна çĕклеççĕ.

«Пĕртен-пĕрескерĕм» пьеса-юратупа ултав, çынлăх хаклавĕсем çинчен, чи телей шыраман çамрăксен чун асапланăвĕ çинчен. Пьесăри ĕçсем паянхи кун пулса иртеççĕ, унти персонажсем-студентсем.

Анютапа Женя ăнсăртран тĕл пулса пĕр-пĕрне юратса пăрахаççĕ. Кĕвĕçекен хĕр-тусĕсем вĕсене уйăрасшăн, Суйкка Женьăна Виолетăпа явăçтарасшăн. Лешĕ - пуян хĕр, уншăн тем пама та хатĕр. Суйккапа Виолетта Анютăна илемĕшĕн, пурте ăна юратнăшăн кĕвĕçеççĕ.

Виолетта качăна тем пекех астарма тăрăшать. Ваня вара Анютана Женьăран туртса илесшĕн, тек-текех ăна кĕвĕçет, хирĕçет. Рита - Анютан чăн çывăх тусĕ. Вăл хĕр-тантăшне телей сунать, уншăн хыпăнса çунать.

Женьăпа Анюта паркра пĕрле пулаççĕ, пĕрлешме калаçса татăлаççĕ, çакна ыттисене те систереççĕ. Ку вут çине краççын сапнă пекех пулса тухать. Виолетта Женьăна çавăрса илет-илетех, карьерăпа астарса (унăн ашшĕ Мускавра министр çумĕ пулса ĕçлет) хăвăрт ăна качча тухать, Мускава илсе каять.

Митяйпа Анюта интернатра ӳснĕ. Вĕсене хăйĕн ачи пулман Раиса Николаевна амăшĕ вырăнĕнче пăхса çитĕнтернĕ. Ыран туй кунĕ пулмалли каç Анюта унта çĕр каçать. Ирхине туй кĕпи тăхăнса Женьăна кĕтсе лараканскер патне хĕр тусĕсем килсе çитеççĕ те Женя сасартăк авланни çинчен, Виолеттана качча илсе Мускава тухса кайни çинчен пĕлтереççĕ. Ку хыпара нимпе те ĕненесшĕн мар хĕр. Пăшăрханаканскер патне тата Митяйпа Ваня килсе çитеççĕ, çав хыпарах тепре пĕлтереççĕ. Ваня Анютана хăйне качча тухма ыйтать, Женя пирки хурласа тем те каласа пĕтерет. Анютан чĕри татăлсах анать. Ку çитмест, Ваня Раиса Николаевнăна пĕр пачка укçа парса Анютана хăйне качча тухма ӳкĕте кĕртме ыйтать. Çавăн чухлĕ укçана курсанах учительницăн пĕтĕм кăмăлĕ пач тепĕр май çаврăнса ӳкет. Вăл пикенсех Анютăна Ваньăна качча тухма хистеме пуçлать. Митяй çакна курса тăрса Ваня Раиса Николаевнăна укçалла сутăн илни пирки пĕлтерет.

Хытă карăнтарнă хĕлĕх пекех татăлса каять Анютăн чунĕ, вăл тăнсăр пулса персе анать. 3-мĕш актра паркра хăй çине фуфайка, урине кирза атă тăхăннă шăрт пек çӳçлĕ хĕр ача çапкаланса çӳрет. Ку-ухмаха тухнă Анюта. Сасартăк Женя пырса кĕрет, анчах вăл малтанах Анютана палламасть, унтан каласа майăн тимлесе пăхсан, хăйĕн юратнă Анюти иккенне ăнланать. Ӳкĕнӳ куççулĕ, чун асапланăвĕ...

Митяй пырса çитет. Икĕ каччă хирĕçсе каяççĕ. Юлашкинчен Анютана психиатрии больницине хумалли пирки калаçса татăлаççĕ.

Акă, Анюта-больницара. Женя унăн пуç вĕçĕнчен кайма пĕлмест. Митяй - ăна сыватакан тухтăр. Хăйĕн пĕтĕм ăсталăхне, вăй-халне, юратăвне, чун ăшшине вăл савнă хĕрĕшĕн пама хатĕр. Каччăсем каллех хирĕçеççĕ. Ваня та килсе çитет, Анюта вăранасса, хăйĕн пуласса ĕмĕтленет. Анюта валли вара хаклă эмелсем кирлĕ. Ăна Суйкка çеç тупма пултарать. Вăл халĕ - пасарти пуян сутуçă. Рита Ваньăна Суйкка урлă эмелсем тупса пама ыйтать. Анчах Суйкка Ваня хăйне кавча илсен çеç çав эмелсене пама килĕшет. Ваня аранах килĕшет. Суйкка вара Виолетта вали ют çĕршывра туса кăларнă эмел туянса килет.

«Юлашки вăхăтра пьесăсемпе ĕçлетĕп. Ĕмĕтсĕрлĕх тени çакăнта пуль тетĕп. Тĕрлĕ жанрпа ĕçлеме вăй виçесшĕн. Сĕтел çинчи ал çыру – паянхи пурнăçăн тупсăмне шыраса çырнă драма пулать» - тет писатель.

Людмила Сачкова çырнă «Пĕртен-пĕрескерĕм» пьесăри Виолета сăнарне Чăваш патшалăх академи драма театрĕн çамрăк артистки Анна Кудряшова калăпланă. Сценăшăн каçăхса кайма хатĕрскер, чăннипех те, çунатланса вĕреннĕ вăхăтра «Пĕртен-пĕрескерĕм» спектакльте хăйне туллин кăтартнă. Иккĕмĕш постановкăра жаргонпа калаçни мĕне тăрать. Спектакле курма пынă автор – Людмила Сачкова – тĕлĕннине пытарман: «Пьесăри сăнарăн прототипĕ лăп та шăп çавнашкал! Ку хĕре ăçтан тупнă» – тесе тĕлĕннĕ. Апла пулсан кашни сăнара тивĕçлĕ артистсем калăплама пултарнине кăтартса парать çак тĕслĕх.

Тĕрлĕ эпизодсем пĕр идейăна пăхăнса тăраççĕ. Автор ку пьесăра хальхи обществăн тӳнтер енне çиеле кăларать. Шаккать, çыравçă этем чунĕн алăкне, сĕмсĕрлĕхрен тухмаллине систерет. Çакна пурнăçлама

кашни этемĕн хăйĕн чунне йĕркене кĕртмелли тасатмалли пирки аса илтерет.

Çӳлерех пăхса тухнине тĕпе хурса çакна палăртмалла, Людмила Сачкова паянхи литературăна этемлĕхшĕн кăсăк тематикăпа, анлă содержанипе тата çĕнĕлле формăпа пуянлатма тăрăшать. Вăл пурнăçа çăра, çуллă сăрăсемпе ӳкерме юратакан художник. Ăна ытларах çын психологийĕ интереслентерет, хайлавсене хăй курнă пек хайлать.

Л. Н. Сачкова пьесисем – сцена ăсталăхĕ тĕлĕшпе йĕркелесе çырнă произведенисем. Содержани енчен те, форми тĕлĕшĕнчен те паха лиризм, философилĕх, çынсен психологине тарăн та уçăмлăн уçса пани курăнса тăрать.

. Унăн пьесисем чăн пурнăçра пулма пултарнă ĕçсемпе паллаштараççĕ. Уйрăм çын, çемье урлă хальхи вăхăтри пурнăç кăларса тăратакан драмăсене, йывăр шăпана, трагедие, чуна пырса тивмелле кăтартса панă. Çак хайлавĕсенчи конфликтсем ĕненмелле пулса тухнă, çын пурнăçĕнчи проблемăсене уçса панă, сюжет аталанăвĕ сахал мар çемьен кулленхи пурнăçĕпе пĕр килет.

ПĔТĔМЛЕТŬ

Илемлĕ тата ăслăлăх литературипе пĕрле публицистика литературăн тĕп тĕсĕсенчен пĕри пулса тăрать. Публицистика - хальхи пурнăç историйĕ, хальхи самана таппи. Ăна публицист кĕрешĕве хутшăнакансене усă кӳмелле сырать.

Людмила Сачкова хайлавĕсем паянхи пысăк пулăмсене ăнланма пулăшаççĕ. Сырасса та чăваш ялĕнчи чăваш ачисемпе чăваш хĕрĕсем çинчен сырать. Пысăк ĕмĕтсемпе çĕн йĕркелӳ тăвас тесе çĕклентĕмĕр, тапаçлантăмăр, ĕмĕтлентĕмĕр, тăрăшрăмăр та – арканса кайрăмăр. Сыравçăн кĕнекисенчи калавсемпе повеçсенче те çавăн пек пулса иртет. Ырă тĕллевпе алла-аллăн тытăнса пурнăçа утса кĕрсе каяççĕ, ача-пăча ӳстересшĕн, кил-çурт çавăрасшăн, ĕçре çитĕнӳсем тăвасшăн, юлашкинчен хурлăхлă, тӳрлетме май çук инкексем патне пырса çапăнаççĕ.

Çырнă чухне автор, ахăртнех, ун пек пысăк пĕтĕмлетӳсем тума ирĕк паракан сăнарсем тупам-ха тесе шутламан та пулĕ, анчах сăнама, туйма пĕлни, пурнăçа тимлĕ сăнани ирĕксĕрех республикăн, çĕр-шывăн пĕтĕмĕшле пурнăçне кăтартать. Пĕр тумламра пĕтĕм тинĕс курăнать тесе калас килет унăн пултарулăхĕ çинчен.

Людмила Сачкова хальхи чăваш литературинчи тухăçлă ĕçлекен сыравçăсенчен пĕри. Унăн хайлавĕсем хăйне евĕрлĕхпе, пысăк ăсталăхпа уйрăлса тăраççĕ. Ытлашши пысăк ĕçсем те пулса иртмеççĕ темелле унăн произведенийĕсенче. Тимлĕреххи, сăнама-курма пĕлекен асăрхатех: вĕсенче – пурнăç таппи, пурнăçри вак-тĕвек. Çав кĕске хайлавсенче – çын сăнарĕ, илемлĕ литература сăнарĕ.

Писатель хайлавĕсем содержани тĕлĕшĕнчен ырă та тĕрĕс туртăмлă, пурнăç чăнлăхĕпе, ырă шухăш-кăмăлпа палăрса тăраççĕ. Илемлĕ хайлав илĕртӳлĕхĕпе вĕрентӳлĕхĕ унăн содержанийĕнче çеç мар, пĕтĕм тытăмĕнче, сăнарлăх витĕмлĕхĕнче, стилĕнче те палăрать.

А. Чехов калашле: «Чăн-чăн писательсен кашни сăмах йĕрки, сĕткенĕпе тулнă евĕр, пурнăç тĕллевне пĕлнипе çуталса тăрать те, эсир вара, куç умĕнчи пурнăçсăр пуçне, тата пулмалли пурнăçа та туятăр, çавă сире ытарма çук илĕртет». Сачкова публицистики тата прозипе драматургийĕ çĕнĕ пурнăç илемне, киревсĕрлĕхне, çутă пуласлăхне туйтарнипе илĕртӳллĕ.

Людмила Сачкова – çак саманана ăнланса çитнĕ, ăнланма пултаракан, пурнăçа шалтан туякан, халăхăн кăмăл-чĕри çывăхне çитекен çыравçă. Сăмах ăсти хайлав тытăмне йĕркелеме: хайлавсене пуçлама та, вĕçлеме те, сăнарăн хăйĕн чĕлхине тупма, характерсене детальсемпе пуянлатма та пĕлет.

Çыравçă чĕлхи таса та тирпейлĕ, ырă вăрлăх пек тутă тĕшĕллĕ, тарăн пĕлтерĕшлĕ. Унăн чĕлхи – сăнлăхлă чĕлхе. Тĕрлĕ илемлĕх мелĕсемпе, тропсемпе усă курать вăл: эпитет, танлаштару, метафора, инверси. Çав сăнлăхсене тумтир çинчи теттесем евĕр хитрешĕн çакса ямасть. Вĕсем хайлавсен шалти содержанийĕпе тачă çыхăнса тăраççĕ, ĕç-пулăма çĕнĕ енчен çутатса пама пулăшаççĕ.

Сăнар тăвас ăсталăхĕ пирки пĕтĕмлетсе çапла каламалла. Çыравçă прозăра чăваш çыннин, уйрăмах ялта пурăнаканăн обществăри, çемье пурнăçне, ĕçне-хĕлне, шухăш-кăмăлне тĕплĕ пĕлсе, пĕчĕк детальсем таранах тĕрĕс кăтартса парать. Калавсемпе повеçсенче паянхи пурнăçра çынсем мĕнле йывăрлăхсемпе тĕл пулнине, вĕсемпе кĕрешме пултарнине, чун тасалăхне çухатманнине туллин сăнлать. Прозăра телейсĕр çемье ыйтăвĕсене хускатасси тăтăшах пулать унăн.

Çыравçă драматургийĕнчи жанрпа стиль палăрăмĕсем шутне çаксене кĕртес килет: жанрсен пуянлăхĕ, шухăша аталнтарса пыни, геройăн чун улшăнăвне палăртни, конфликтпа характер проблемин çĕнĕлĕхĕ. Вулакан кăмăлне шута илсе хайлавсене приключени е фантазилле, лирикăпа романтикăлла калăплать.

Людмила Сачкова публицист пулнине палăртса çакна каламалла: публицистика статйисенче, радиора янăранă кăларăмсенче саманан çивĕч ыйтăвĕсене хускатать, паянхи пурнăçра ачасене тĕрĕс пăхса ӳстерме йыхăрать, çăмăлах мар тĕнчере темле йывăрлăх сиксе тухсан та малалла талпăнма хушать. Хаçатри, журналти хайлавĕсенче паянхи пурнăçа, тĕпрен илсен, хальхи çамрăксен пурнăçне, пархатарлă ĕçĕ-хĕлне, чун тасалăхне сăнласа пама кăмăллать.

Çыравçă вулакансен кăмăлне кайни пурнăç пулăмĕсене, çынсен сăнарĕсене витĕмлĕн, куçа курăнмалла кăтартса, аса илнисене, пĕтĕçтернисене вичкĕн, реализмла, тĕп-тĕрĕс çырса сăнласа панисенче курăнать.

Людмила Сачкова хайлавĕсенче ытларах философиллĕ шухăша палăртма тăрăшать. Пуринчен ытларах ырă геройсен психологизмне уçса парать.

«Кăçал эпĕ хама çĕнĕрен çуралнă пекех туйнă вăхăт пулчĕ. Ку вăл хам çулпа, хамăн вăя ăнланса илнипе, пурнăçа яр уççăн курса илнĕ самант пулчĕ. Кунта кампа та, мĕнпе те çыхăнман. Кунта пултарулăх та, кунта ман чун та, ăс-хаклав та, юлташсем те, ман тавралăх... Урăхларах каласан, кăмакара çăкăр пиçсе çитсен пӳрте тутлă шăршă тухать... Пурнăç тутине ăнланнă самант» - тесе вĕçлерĕ калаçăва Людмила Сачкова.

Автор чĕлхи пирки калас пулсан вара вăл ĕнентерӳллĕ-сăлтавлатуллă пулнисĕр пуçне илемлĕ публицистикăлла та, сăнарлă-ӳкерчĕклĕ пулнине палăртса хăварар. Ку ĕçе литературăпа ăслăлăх хутлăхĕнчи сĕтеклĕ стиль витерсе тăрать. Публицистика стайи пулин те, вăл илемлĕ хайлав евĕр вуланать. Ку пулăм Людмила Сачкова чăннипех те талантлă çын пулнине çирĕплетет.

Паянхи литературăн чапĕсем хушшинче Сачкова сассин шăнкăравĕ çухалмасса шанатпăр эпир.

Людмила Сачкова паянхи кун та ырми-канми ĕçлет. Çыравçă пултарулăхне пĕтĕмпех тишкертĕмĕр теме çук-ха, унта уçман çерем темĕн чухлех. Пирĕн ĕçпе усă курса ку ыйтăва тата малалла аталантарма май пуласса шанатпăр.

Журналист пулас текенĕн хаçат-журнал вулас, радио-, телепередача час-час курас кăмăл яланах пулмалла. Пурнăç ытла та хăвăрт аталаннăран ăна вăхăтра тата хăвăрт, тĕрлĕ енчен хак пама журналистикăн мелĕсем витĕмлĕ. Çавăнпа ĕнтĕ унăн витĕмлĕхĕ, пурнăçри пĕлтерĕшĕ ӳссе пырать.

УСĂ КУРНĂ ЛИТЕРАТУРА

1. Альби, А. Пукане театрĕн ӳсĕмĕсем / А. Альби // Ăвăслăхри уçланкăра. – Шупашкар, 1991. – С. 219 – 222.

2. Анализ литературного произведения / Под. ред. Л. И. Емельянова. – Л., 1976. – С. 213.

3. Артемьев, А. С. Пурнăç чăнлăхĕпе писатель ăсталăхĕ. Публицистика. Литература теорийĕ: статьясем / А. С. Артемьев. – Шупашкар, 1984. – 61 с.

4. Артемьев, Ю. М. Ирĕк шухăшсем, Критика статйисем / Ю. М. Артемьев. – Шупашкар : Чăваш кĕн. изд-ви, 1991. – 207 с.

5. Афанасьев, П. Писатели Чувашии: библиографический справочник / П. Афанасьев. – Чебоксары, 2006. – 558 с.

6. Бегак, Б. А. Воспитание искусством / Б. А. Бегак. – М. : Просвещение, 1981. – 94 с.

7. Вазянова М. Г. Своеобразие жанра «Стихотворение в прозе» в национальной литературе (на примере чувашской литературы) / М. Г. Ваязанова // Известия Томского политехнического университета. – 2008. – № 6. – С. 179 –183.

8. Васильев, Н. В. Авалхи туссем / Н. В. Васильев. – Шупашкар: Чăваш кĕнĕ изд-ви, 1974. – 28 с.

9. Васильев, Н. В. Чĕрĕлĕх: калавсемпе юмахсем / Н. В. Васильев. Шупашкар : Чăваш кĕн. изд-ви, 1981. – 48 с.

10. Данилов, А. Чăваш публицистики / А. Данилов. – Шупашкар, 1991. – 76 с.

11. Ермакова, Е. Илемлĕ çамрăк ĕмĕр пурăнма пĕлсен кăна / Е. Ермакова // Халăх шкулĕ. – 2000. – 4 №. – С. 102 –104.

12. Канюков, В. Развитие литературы и народные художественные традиции: проблемы литературно-фольклорных отношений / В. Канюков. – Чебоксары, 1979 – 192 с.

13. Кĕнеке вуласа ӳсекен ача – чунлă ача // Тантăш. – 2003. – 9 №. – С. 9

14. Краткая литературная энциклопедия. – М. : Советская энциклопедия, 1972. – 586 с.

15. Кузьмина, И. «Шăпăрлан» кун çути курчĕ / И. Кузьмина // Чăваш хĕрарăмĕ. – 2003. – 41 №. – С. 3.

16. Куликова, О. Пĕрремĕш шур аппа – Людмила Сачкова / О. Куликова // Капкăн. – 2003. – 10 №. – С. 3

17. Лакшин, В. Я. Литература дело суровое: Читая «Письма о литературе» / В. Я. Лакшин // Известия. - 1986. - 13 июня.

18. Мефодьев, А. И. Чăваш ача-пăча литератури. 40-50-мĕш çулсем: вĕренӳ кĕнеки / А. И. Мефодьев. – Шупашкар: И. Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика ун-чĕ, 2011. – 244 с.

19. Мефодьев А. И. Чувашская детская литература. Часть 1: истоки, возникновение, формирование / А. И. Мефодьев. – Чебосары : Чувашский гос. пед. ун-т, 2008. – 200 с.

20. Михайлов М. М. Двуязычие в современном мире / М. М. Михайлов. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. гос. ун-та. 1988. – 69 с.

21. Мышкина, А. Çĕнĕ ĕмĕрĕн сăнарĕ тăван литературăра / А. Мышкина // Тăван Атăл. – 2003. – 10 №. – 64 с.

22. Никифорова В. В. XX ĕмĕр вĕçĕнчи чăваш прозинчи çĕнĕ туйăмсем (1995-2000) / В. В. Никифорова // Халăх пултарулăхĕпе илемлĕх астăвăмĕ фольклорта тата литературăра палăрса тăни. – Шупашкар, 2006. – С. 125-151.

23. Озеров, Л. А. «Стихотворения в прозе» Тургенева // Мастерство русских классиков / Под ред. П. Г. Пустовайт. – М. : Советский писатель, 1969. – С. 46–50.

24. Оленкина, И. Чунра / И. Оленкина // Чăваш хĕрарăмĕ. – 2001. – Пуш, 31.

25. Павлов, Н. С. Проблема конфликта в чувашской драматургии: крат. ист. обзор / Н. С. Павлов. – Чебоксары. Чуваш. кн. изд-во, 1966. – 108 с.

26. Петров, К. Чăваш журналистикничи жанрсем / К. Петров. – Шупашкар, 1990. – 68 с.

27. Пĕр тумламра – пĕтĕм тинĕс // Ялав. – 1998. – 4 №. – 115 - 118 с.

28. Родионов, В. Г. Чувашский стих, проблемы становления и развития / В. Г. Родионов – Чебоксары : Чуваш. кн. изд-во. – 1992. – 216 с.

29. Сачкова, Л. Чĕкеçĕм, чĕкеç...: калавсемпе повеçсем / Л. Сачкова. – Шупашкар, 1996. – 158 с.

30. Сачкова, Л. Ытарайми куçсем: прозăлла сăвăсем, калавсем, очерксем / Л. Сачкова, – Шупашкар, 2000. – 98 с.

31. Сачкова, Л. Шăпăрлан / Л. Сачкова. – Шупашкар, 2003. – 137 с.

32. Сачкова, Л. Сĕвĕм-сĕвĕм шур шухăш / Л. Сачкова // Тăван Атăл. – 10 №. – 18 с.

33. Сачкова, Л. Çăлтăр айĕн çар уран... / Л. Сачкова // Чăваш хĕрарăмĕ. – 1999. – Раштав, 18. – С. 2.

34. Сачкова, Л. Тургеневская анкета / Л. Сачкова // Экран и сцена. – 1997. – Çу, 26 – Çĕртме, 1. – С. 2.

35. Сачкова, Л. Тутарстан чăвашĕсен Аслă пухăвĕ / Л. Сачкова // Хыпар. – 2005. – Çу, 6. – С. 1.

36. Сачкова, Л. Çеçенхирти ир / Л. Сачкова. – Шупашкар. 2012. – 103 с.

37. Сачкова, Л. Этнояла çитесшĕн / Л. Сачкова // Тăван Ен. 2013. – Çурла, 30. – Авăн, 5. – 33 №. – С. 7.

38. Сачкова, Л. Вăй-хала усăллă пĕтермелле / Л. Сачкова // Тăван Ен. – Ака, 5 – 33 №. – С. 4.

39. Сачкова, Л. Наука çӳпçи пуян – Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн директорĕ Ю. Н. Исаев çинчен / Л. Сачкова // Тăван Ен. – 2013. – Июль, 26 – Август, 1. – 28 №. – С. 8.

40. Сачкова, Л. Институт пусмисем – гранитран – Г. А. Николаев истори тĕпчевçи çинчен / Л. Сачкова // Тăван Ен. – 2013. – Май, 24-30. – С. 8.

41. Сачкова, Л. Ĕмĕрхи шăн пăра катакан чĕлхеçĕ. Л. П. Петров доцент çинчен / Л. Сачкова // Тăван Ен. – 2013. – Май, 13. – С. 8.

42. Сачкова, Л. Миф-юрату. Халăх сăмахлăхне чун варринче упракан тĕпчевçĕн шăпи – В. А. Ендеров ăсчах çинчен / Л. Сачкова // Тăван Ен. – 2013. – Март, 18. – С. 8.

43. Сачкова, Л. Кăмăл сипечĕ / Л. Сачкова // Пике. – 1991. – № 2. – С. 2-5.

44. Семенова, И. Людмила Сачкова / И. Семенова // Чăваш хĕрарăмĕ. – 2002. – Çу, 18–24. – С. 5.

45. Силэм, Ю. Людмила Сачкова / Ю. Силэм // Ялав. – 2000. – 2 №. – 14-15 с.

46. Смирнова, Н. Юратуллă кунсемшĕн – кӳлленчĕкре те çăлтăрсем выляççĕ / Н. Смирнова // Хыпар. – 2000. – Çу, 17. – С. 4.

47. Топрисов, И. Ăслă пуçпа çӳресен / И. Топрисов // Хыпар. – 1999. – Пуш, 18. – С. 3.

48. Утăм. – Шупашкар : Чăваш кĕн. изд-ви, 1988. – 160 с.

49. Уяр, Хв. Лайăх кĕнеке / Хв. Уяр // Хыпар. – 2000. – Кăрлач, 18. – С. 4.

50. Федоров, Г. И. Паянхи прозăри калавпа повесть / Г. Федоров, Ю. Яковлев, Д. Гордеев // Тăван Атăл. – 1993. – 2 №. – С. 67-73

51. Федоров, Г. И. Сăнарлă сăмах шыравĕ / Г. И. Федоров. – Шупашкар : Чăваш кĕн. изд-ви, 1996. – 224 с.

52. Федоров, Г. И. Ĕмĕр чиккисен ани, çутă кун-ши е тĕттĕм каç (Чăваш прозин юлашки çулĕсенчи аталанăвĕ) / Г.И. Федоров // Тăван Атăл. – 2005. – 8 №. – С. 61.

53. Чăваш совет литератури: илемлĕ ăсталăх ыйтăвĕсем: статьясен пуххи. – Шупашкар, 1990. – 121 с.

55. Хальхи чăваш литературин илемлĕ ăсталăх ыйтăвĕсем. Статьясен пуххи. – Шупашкар, 1990. – 122 с.

56. Ялдра, Ж. Хĕрарăм телейĕ камран килет? / Ж. Ялдра // Çамрăксен хаçачĕ. – 1997. – Çу, 31. – 7 с.

ТУПМАЛЛИ

КӲРТЁМ.....3

I ПАЙ. ЛЮДМИЛА САЧКОВА - ПУБЛИЦИСТ.....10

1.1. «Пике» тата «Тăван Атăл» журналсенче тухнă статьясенчи туртăмсем.....10

1.2. «Тăван ен» хаçатра пичетленнĕ материалсен пахалăхĕ.....23

1.3. Чăвашрадиора янăранă хайлавсен ăсталăхĕ.....26

II ПАЙ. ЛЮДМИЛА САЧКОВАН ПРОЗĂРИ СĂНАР ТĂВАС ĂСТАЛĂХĔ.....32

2.1. «Чĕкеçĕм, чĕкеç...» кĕнекери хайлавсен илемлĕхпе стиль уйрăмлăхĕсем.....32

2.2. «Ытарайми куçсем» кĕнекене кĕнĕ прозăлла сăвăсемпе калавсен, очерксен туртăмĕсем.....45

2.3. «Çеçенхирти ир» кĕнекене кĕнĕ хайлавсен сăнарлăхĕ.....48

III ПАЙ. ÇЫРАВÇĂ ДРАМАТУРГИЙĔНЧИ ЖАНРПА СТИЛЬ ПАЛĂРĂМĔСЕМ.....52

3.1. Ача-пăча валли çырнă пьесăсен сăнарлăх паллисем 52

3.2. Çамрăксем валли çырнă драма хайлавĕсен хăйне евĕрлĕхĕ.....61

ПĔТĔМЛЕТӲ.....69

УСĂ КУРНĂ ЛИТЕРАТУРА.....73

200.00

Учебное издание
Владимирова Полина Захаровна

ПУБЛИЦИСТИКА И ХУДОЖЕСТВЕННАЯ ЛИТЕРАТУРА В ТВОРЧЕСТВЕ ЛЮДМИЛЫ САЧКОВОЙ

Редактор *Л.А. Васильева*

Компьютерная верстка и правка *П.З. Владимирова*

Подписано в печать 20.06.2019. Формат 60x84/16

Бумага офсетная. Печать офсетная. Гарнитура «Times New Roman»

Усл. печ. л. 4,25. Уч.-изд. л. 3,4. Тираж 5 экз.

Отпечатано в типографии «Радуга» г. Чебоксары пр. Мира 9, офис 109

